[illegible]

1941
ФЕВРАЛЬ
20
КĔÇНЕРНИКУН
42 (5757) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ

Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ МАЛЕНКОВ юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюци

I.

ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ĔÇĔНЧИ ÇИТĔНÿСЕМПЕ ÇИТМЕНЛĔХСЕМ

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ çакна палăртать: Совет Союзĕн промышленноçĕпе транспорчĕ 1940 çулта виççĕмĕш пиллĕкçуллăх плана тултарас ĕçре чылай малалла кайрĕç, производство пысăккĕшне ÿстерчĕç, халăх хуçалăхне чылай малалла ÿстерчĕç тата ССР Союзĕн оборона вăйхăватне тĕреклетрĕç.

Социализмлă промышленноçăн продукцийĕ 1940 çулта, 1939 çултипе танлаштарсан, 11 процент ÿсрĕ; çав вăхăтрах промышленность производстви ÿсĕмĕн хăвăртлăхĕсем 1940 çулта тăтăшах çĕкленсе пычĕç.

Промышленноçăн чи пысăк вырăнта тăракан чылай отраçлисен ĕçĕ, уйрăмах 1940 çулăн иккĕмĕш çурçулĕ хушшинче, лайăхланчĕ. Çĕркăмрăкĕ кăларасси чылай ÿсрĕ. Чугун, хурçă шăратса кăларасси тата прокат производстви ÿсрĕ, квалификированнăй машиностроенипе оборона промышленноçĕн нушисем валли каякан специальнăй маркăллă хурçă тата паха прокат туса кăларасси уйрăмах ÿсрĕ. Цветной металлурги те, уйрăмах пăхăр тата алюминий кăларас тĕлĕшпе, хăйĕн ĕçне хăшпĕр таран лайăхлатрĕ. Машиностроени промышленноçĕ 1940 çулта çĕнĕ тĕслĕ сложнăй машинăсем тата чи çĕнĕ конструкциллĕ станоксем туса кăларма тытăнас тĕлĕшпе татах та çитĕнÿсем турĕ.

Оборона промышленность наркомачĕсен продукци ÿсĕмĕн хăвăртлăхĕсем 1940 çулта пĕтĕм промышленность продукци ÿсĕмĕн хăвăртлăхĕсенчен чылай пысăкрах пулчĕç.

Çĕнĕ техникăна алла илес ĕçри çитĕнÿсене тата оборона промышленноçĕ ÿснине пула, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ техникăпа — çĕнĕ тĕслĕ тата кучухнехи типлă хĕçпăшалсемпе авăрланасси чылаях ÿсрĕ.

Çавăн пекех текстиль, çăмăл тата апат-çимĕç промышленноçĕсем те хăйсен ĕçне хăшпĕр таран лайăхлатрĕç.

Чугунçулсемпе шывçулĕсем тăрăх таварсем турттарасси ÿсни халăх хуçалăхĕн питех те кирлĕ отраçлисене топливо, руда, металл, йывăç тата ытти чĕртаварсемпе материалсем парса тăрассине лайăхлатма май пачĕ.

1940 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче промышленноçпа транспортăн ĕçĕсене лайăхлатас ĕçре партипе правительство ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе йышăннă мероприятисем тата сакăр сехетлĕ ĕç кунĕ çине, çичĕ кунлă ĕç эрни çине куçни пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

Çак мероприятисене пула предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ ÿсрĕ, ĕç дисциплини çирĕпленчĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ, промышленноçпа транспорт ĕçĕнче, çитĕнÿсемпе пĕрлех, çапах та, пысăк çитменлĕхсем те пур, тесе шутлать.

Промышленноçăн чылай отраçлисем, уйрăмăнах паровозсемпе вагонсем тăвасси, электропромышленность, вăрман, хут, пулă тытакан тата строительство материалĕсем туса хатĕрлекен промышленноçсем юлса пыраççĕ, производство планĕсене тултармаççĕ. Нефть промышленноçĕ, 1940 çулăн IV кварталĕнче хăйĕн ĕçне палăрмаллах лайăхлатрĕ пулин те, çапах та, 1940 çулти плана тултармарĕ. Промышленноçăн пĕтĕмĕшпе илсен хăйсен ĕçне лайăхлатнă отраçлисенче те нумай вăхăт хушши кая юлнипех тăракан чылай предприятисем, вăл хисепре шултра предприятисем те, пур.

Промышленноçăн чылай отраçлисем çĕнĕ производствăллă мощноçсене вăхăтра ĕçе ямаççĕ.

Промышленноçăн чылай отраçлисенче, чĕртавар, материалсем, топливо, электроэнерги ытлашши расходланипе пула, брак тата ытти хуçасăрла расходсем тунипе пысăк тăкаксем курнине пула, промышленность продукцине туса кăларма ларакан хака чакарас плана тултарман. Ку вăл уйрăмăнах промышленноçăн çакăн пек отраçлисене — нефть, вăрман, хут промышленноçĕсене тата строительство материалĕсем тăвакан промышленноçа пырса тивет.

1940 çулта электростанцисен ĕçĕсем лайăхланчĕç пулин те, электростанцисенче тата уйрăмах электролинисем çинче, технически персонал япăх ĕçленине тата эксплоатаци техникăллă правилисене пăхăнманнине пула, халĕ те аварисем нумай пулаççĕ-ха. Çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртесси: пысăк давлени тата пăсăн пысăк температури çине куçасси, аггрегатсен управленине автоматизацилесси, кучухнехи хăвăрт ĕçе кĕрекен электрозащитăпа усă курасси — вăраххăн тата çителĕксĕр хисеппе пулса пырать.

Транспорт ĕçĕнче те çавăн пекех пысăк çитменлĕхсем пур. Чугунçул транспортĕнче вагонсене илсе çÿреме кăтартса панă нормăсене тултармаççĕ тата аварисен хисепĕ халĕ те пит пысăк-ха. Чугунçулсем чылайĕшĕ чи кирлĕ грузсене турттарассине çителĕклĕ туса пымаççĕ, пассажирсене турттарса çÿрессине кирлĕ пек организацилемен, поездсем кая юлса çÿренине пĕтермен.

Тинĕссемпе юханшыв транспортĕнче портсемпе пристаньсенче тиес тата пушатас ĕçсене япăх организациленĕ, суднăсем çÿрессине организацилессинче те çитменлĕхсем пур тата флотăн техникăллă эксплоатаци правилисене пăснисен хисепĕ халĕ те пысăк-ха, çавна пула суднăсем час-часах стройран тухаççĕ тата вĕсене навигаци вăхăтĕнчех ремонта тăратаççĕ.

Чугунçул станцисен, портсен тата пристаньсен ĕçĕнче ĕçе кирлĕ пек тĕрĕс çыхăнтарса пыни çук, ку вăл тоннаж тата ĕçре çÿрекен состав нумай вăхăт хушши ахаль тăрасси патне, грузсене пушатса тиемелли пунктсенче нумай вăхăт хушши тытса тăрасси патне илсе пырать.

II.

НАРКОМАТСЕМПЕ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ТАТА ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШĔНЧИ ĔÇĔН ÇИТМЕНЛĔХĔСЕН СĂЛТАВĔСЕМ

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ промышленноçăн чылай отраçлисем çителĕксĕр ĕçлени чи малтан çак сăлтавсенчен килет тесе шутлать:

а) Наркоматсем хăйсен ĕçне нумай тĕлĕшре бюрократла туса пыраççĕ, кашни уйрăм предприяти патне çитсе пăхмаççĕ-ха, хăйсен предприятийĕсене ĕçе пĕлсе мар, формальнă, хутсем çÿретни урлă «ертсе пыраççĕ»;

б) Наркоматсем хăйсен решенийĕсене предприятисен директорĕсем мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеççĕ, çапла вара, хăйсен ертсе пырас ĕçĕнче коллегисен заседанийĕсемпе тата решенисем йышăннипе лăпланса лараççĕ, решенисене ĕнтĕ решенишĕн мар, пурнăçа кĕртме йышăннине ăнланмаççĕ, ертсе пырас ĕçре тĕп вырăнта тăраканни заседанисем туса ĕçлени мар тата решенисем йышăнни мар, çав решенисене пурнăçа кĕртнине куллен-кун тĕрĕслени пулмаллине ăнланмаççĕ;

в) Партин вырăнти организацийĕсем нумайĕшĕ, хăйсен облаçĕнчи, районĕнчи предприятисене пулăшас вырăнне, промышленноçпа транспорт ĕçĕшĕн вĕсем ответлă мар тесе тĕрĕс мар шутласа, хăйсен ĕçне промышленноçра та, транспортра та вăйсăрлатрĕç;

г) Партин вырăнти организацийĕсем те, хуçалăхла организацисем пекех, кашнă ĕçе тĕрĕслени тупсăмне тата пĕлтерĕшне ăнланмаççĕ, çавна пула наркоматсене пăхăнса тăракан предприятисен директорĕсем наркоматсен решенийĕсене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăрассине йĕркелесе яма наркоматсемпе главксене пулăшмаççĕ.

Партин нумай обкомĕсем, ялхуçалăх енĕпе, ялхуçалăх продуктисен заготовкисем тĕлĕшпе ĕçлесе, промышленноçра тата транспортра ĕçлеме пăрахнă, хăйсен облаçĕнчи, хулинчи, районĕнчи заводсен, фабрикăсен, шахтăсен, рудниксен, чугунçулсен ĕçĕшĕн хăйсем ответлă пулса тăни çинчен манса кайнă, парти горкомĕсем вара — промышленноçпа транспорт çине пуринчен те ытларах çавăрăнса пăхма тивĕçлĕскерсем, çак енĕпе ĕçлемеççĕ тата юлса пыракан предприятисемпе чугунçулсен ĕçне лайăхлатса ярас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмаççĕ.

Парти горкомĕсемпе обкомĕсем, фабрикăсен, заводсен, чугунçулсен ĕçĕсене кĕрсе хутшăнас вырăнне, час-часах промышленноçпа транспорт аяккинче тăраççĕ, предприятисен ĕçне контроллемеççĕ, фабрикăсенчи, заводсенчи тата чугунçулсем çинчи ертсе пыракан çынсене тĕрĕслемеççĕ, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене уçса палăртмаççĕ, çапла тунипе вара çав çитменлĕхсене малалла та пулса пыма май параççĕ.

Парти горкомĕсемпе обкомĕсем хăйсен чылай предприятийĕсем нумай вăхăт хушши тарăн прорыврта тăнине хăнăхса çитнĕ тата çак киревсĕр явление пĕтерес тĕлĕшпе витĕмлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Парти горкомĕсемпе обкомĕсем союзлă наркоматсене пăхăнса тăракан предприятисемпе тата промышленнăй стройкăсемпе уйрăмах начар ĕçлеççĕ, çав предприятисемпе стройкăсенче ĕçсем мĕнле тăнишĕн наркоматсем çеç ответ тытаççĕ тесе йăнăш шухăшлаççĕ.

Парти горкомĕсемпе обкомĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх вăл çакă пулса тăрать: вĕсем предприятисен ĕçне тĕплĕн кĕрсе пăхмаççĕ, предприятисен экономикине тĕпчесе вĕренмеççĕ тата, çапла тăвас вырăнне, час-часах çиелтен тĕрĕсленисемпех тата конкретлă мар решенисем йышăннипех ирттерсе яраççĕ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ çапла шутлать: горкомсем, обкомсем, крайкомсем, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсем, наркоматсемпе пĕрлех, хулари, облаçри мĕнпур промышленнăй тата транспорт предприятийĕсен ĕçĕшĕн ответ тытма тивĕçлĕ. Шăпах ĕнтĕ горкомсен, обкомсен, крайкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен тÿрремĕнех вырăнта, ытларах объективлă пулса, ансăр ведомствăллă интерессене шута илмесĕр, предприятинче ĕçсем мĕнле тăнине чухласа илме, унăн ĕçĕнчи çитменлĕхсем мĕн пирки пулса пынине палăртса пама тата предприятисенчи ертсе пыракан работниксемпе наркоматсене çав çитменлĕхсене пĕтерес ĕçре пулăшма майсем пур.

III.

ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШĔНЧИ ХУÇАЛĂХЛА-ПОЛИТИКĂЛЛĂ ЗАДАЧИСЕМ

Промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тесен, парторганизацисен хуçалăхла-политикăллă задачисем енĕпе мĕнле мерăсем йышăнмалла?

1. Пуринчен малтан, парти организацийĕсем промышленноçпа транспорт ĕçĕ çине интересленмесĕр пăхнине йăлтах пĕтерес пулать, **парторганизацисен тимлĕхне промышленноçпа транспорт нушисемпе интересĕсемшĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшасси еннелле татăклăнах çавăрас пулать.**

Парти организацисем промышленноçлă предприятисен, чугунçулсен, пароходствăсен, портсен ĕçĕсене тăтăшах тĕпчесе пĕлсе тăни, вĕсен нушисемпе ыйтăвĕсене палăртса пыни тата хуçалăх организацисене вĕсем промышленноçпа транспорта ертсе пырас тĕлĕшпе куллен туса пыракан ĕçре пулăшу пани кирлĕ.

Парти организацийĕсен тĕп тимлĕхĕ халиччен ялхуçалăхне ертсе пырас ĕç çинче пулнă. Тĕштырă проблемипе татса паман чухне çакă вăл тĕрĕс пулнă. Анчах та халĕ, тĕштырă проблемине тата çулсеренех 7—8-шар миллиард пăт тĕштырă туса илес проблемăна тĕпрен илсен татса панă хыççăн,— **парти организацийĕсене промышленноçпа транспорт еннелле çаврăни кирлĕ.** Çакă вăл ялхуçалăх тĕлĕшпе тимлĕхе вăйсăрлатмаллине пĕлтермест. Анчах çакă вăл акă мĕне пĕлтерет: парти организацийĕсем вăйлăн ÿсрĕç, вĕсем промышленность тĕлĕшпе те, ялхуçалăх тĕлĕшпе те **пĕр танах** ĕçлесе пыма пултараççĕ.

2. Малалла, парторганизацисем предприятисен директорĕсен ĕçне тĕрĕслес, **наркоматсен решенийĕсене предприятисем пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслес ĕçре** наркоматсемпе главксене пулăшса пыни кирлĕ.

Парти организацийĕсем çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: предприятисен ĕçне, наркоматсен решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пынине пĕр наркоматсем кăна тĕрĕслесе тăма пултараймаççĕ. Çавăнпа та парти организацийĕсем наркоматсен директивисене предприятисем пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслес ĕçре, урăхла каласан, предприятисен директорĕсен ĕçне контроллес ĕçре наркоматсене пулăшу пама тивĕçлĕ.

3. Малалла, промышленноçлă предприятисемпе чугунçулсем çинче **оборудованине, мĕнпур йышши пурлăхпа материалсене учета илес ĕçе тĕрĕс йĕркелесе яни кирлĕ.**

Парти организацисем çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: тĕрĕс учет пулмасан, предприятине тата чугунçула ертсе пыма çук. Мĕн чухлĕ те пулин йĕркеллĕ учет çук предприятисен ĕçĕнче кĕтмен япаласем тухса тăма пултараççĕ. Çавăн пек предприятисенче, руководитель кĕтмен çĕртенех ку е урăх чĕртавар, материалсем, çурмафабрикатсем, инструментсем, оборудовани çителĕксĕр пулнипе, производствăра пурпĕрех чăрмавсем пулма пултараççĕ.

Оборудовани тата материалсен учетне япăхтарса яни директора предприятин ресурсĕсемпе тĕрĕс тата пĕтĕмпех усă курма тата производствăна татти-сыпписĕр ĕçлеттерсе пыма май памасть.

4. Малалла, пирĕн промышленноçлă предприятисенче, чугунçулсем çинче тата шывçул транспорчĕн организацийĕсенче **оборудованипе пĕтĕмĕшпех тата тĕрĕс усă курни, инструментпа, чĕртаварпа, материалсемпе, топливăпа, электроэнергипе типтерлĕ усă курни** кирлĕ.

Парти организацисен çакна ăнланса илмелле: çакăн пек питех те сиенлĕ практикăна — предприятисенче тата чугунçулсем çинче станоксем тата ытти оборудованисем ĕçсĕр ларассине, хăш чухне тата вĕсем складсенче ахалех выртассине, дефицитлă квалификациллĕ оборудованипе, производствăн сложнăй аггрегачĕсемпе, пысăк станоксемпе кирлĕ çĕрте мар е тулли нагрузка парса мар усă курнине тата чĕртаварсене, материалсене, топливăпа электроэнергине типтерсĕр расходланине татăклăнах пĕтерме вăхăт ĕнтĕ.

5. Малалла, çакна туни кирлĕ: промышленноçлă предприятисемпе транспортра пĕтĕм **материаллă пурлăхсене лайăх тытса усрамалла,** предприяти руководителĕсем государствăн хăйсене шанса панă пурлăхне: çурт-йĕрсене, оборудованисене, инструментсене, материалсене упрамалла.

Халăх пурлăхне тирпейсĕр, хуçалăхла мар тыткаланипе халех пĕтермелле. Пирĕн промышленноçа валли питех те кирлĕ оборудованисем, чĕртаварсем, материалсем, инструментсем час-часах ăçта килнĕ унта йăваланса выртса, пăсăлса, тутăхса юрăхсăра тухнине, оборудованине, çурт-йĕрсемпе сооруженисене, чугунçулсен ĕçри составĕсене вăхăтра мар тата начар юсаса, вĕсене вăхăтсăрах пăсса стройран кăларнине халех пĕтерсе хумалла.

6. Малалла, çакна туни кирлĕ: **нумай предприятисемпе чугунçулсем çинче усă курма çук текен тата ытлашши оборудованипе материалсене сутас йăлана пĕтерсе хумалла,** мĕншĕн тесен вăл социализмлă харпăрлăха çаратнипе пĕрех пулса тăрать.

Парти организацийĕсем СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 çулти февралĕн 10-мĕшĕнче «Оборудованисемпе материалсене сутма, улăштарма тата урăх çĕре пама чарасси çинчен тата çак закона хирĕçле ĕçсемшĕн суд умĕнче ответ тыттарасси çинчен» кăларнă Указа пурнăçа çирĕп кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăма тивĕç.

7. Малалла, çакна туни кирлĕ: предприятисемпе чугунçулсем çинче **тасалăх тата элементарлă йĕркелĕх** туса хурас пулать, çав предприятисемпе чугунçулсене кунсеренех таса та йĕркеллĕ тытса тăрас пулать.

Предприятисенче тасалăхпа йĕркелĕх тытса пырас задачăна, вăраха яма юраман задача вырăнне хурса, парти организацийĕсем халех татса пама тивĕçлĕ. Тасалăхпа йĕркелĕх пулмасан, кучухнехи предприяти йĕркеллĕ ĕçлеме пултараймасть. Тасамарлăх вăл — пурпĕрех йĕркесĕрлĕхе, дисциплина юхăнса каяссине, заводра, фабрикăра, чугунçул çинче йĕркесем пăсăлассине çуратать тата вĕсен çăлкуçĕ пулса тăрать. Производствăра элементарлă культурлăх пулмасан, пирĕн промышленноçпа транспорта малалла çĕклесе пыма май пулмасть.

8. Малалла, çакна туни кирлĕ: предприятисен ĕçĕнчи плансăрлăха, продукцине пĕр пек мар кăларса тăрассине, штурмовщинăна пĕтерес пулать, производствăллă программăна кашни завод, фабрика, шахта, чугунçул малтанах туса хатĕрленĕ график тăрăх кунсерен тултарса пымалла тăвас пулать.

Парти организацийĕсен çакна ăнланса илмелле: хатĕр продукцисене пĕр пек мар кăларса тăни предприяти ĕçĕнче тĕрĕс мар йĕрке туса хурать, оборудовани простой тăвасси патне, ĕç вăйĕсем простой тăвасси патне, производствăллă мощноçсемпе çителĕксĕр усă курасси патне, брак ÿсесси патне, ĕç вăхăчĕ иртнĕ хыççăн ĕçлеттерсе ытлашши тăкаксем тăвасси патне илсе пырать. Çакнашкал тĕрĕс мар йĕрке пулни предприятисене калкал тата йĕркеллĕ ĕçлеме май памасть, вĕсене яланах государство планне тултармасăр хăварас хăрушлăх умĕнче тытса тăрать.

Юлашки 3-мĕш страницăра

ВКП(б) ПĔТĔМ СОЮЗРИ XVIII КОНФЕРЕНЦИЙĔ УМĔНЧЕ

Мандат Комиссийĕ тунă доклад

Докладчик ***ШАТАЛИН*** *юлташ*

Юлташсем! Мандат Комиссийĕ мана комисси ĕçĕсен результачĕсем çинчен каласа пама хушрĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине яма пурĕ ĕç тăвакан сасăпа 457 делегат суйланă. Конференцине ĕç тăвакан сасăпа 456 делегат килнĕ, пĕр делегат чирленĕ пирки конферецине килеймен.

Пĕтĕм Союзри XVIII конференци делегачĕсем — ВКП(б) 2.515.481 членĕн тата ВКП(б) 1.361.404 кандидачĕн представителĕсем, пурĕ парти членĕсемпе кандидачĕсен 3.876.885 çыннăн представителĕсем пулса тăраççĕ.

Партин XVIII съезчĕн делегачĕсем — партин 1.583.852 членĕпе ВКП(б) 888.814 кандидачĕн представителĕсем, пурĕ парти членĕсемпе кандидачĕсен 2.477.666 çыннăн представителĕсем пулнă.

Çапла ĕнтĕ, партин XVIII съезчĕ пулнăранпа иртнĕ тапхăр хушшинче ВКП(б) членĕсен хисепĕ 926.629 çын чухлĕ ÿснĕ, парти кандидачĕсен хисепĕ 472.590 çын чухлĕ ÿснĕ, съезд пулса иртнĕренпе парти членĕсемпе кандидачĕсен пĕтĕм хисепĕ 1.399.219 çын чухлĕ ÿснĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Мандат Комиссийĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине суйласа янă пур делегатсен полномочийĕсене те тĕрĕслесе тухнă.

Мандатсем панă чухне Мандат Комиссийĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине делегатсем суйласа ямалли представительство нормисене, партин Центральный Комитечĕ парти Уставĕ тăрăх палăртса çирĕплетнĕ нормăсене, асра тытса ĕçленĕ: парти членĕсем 10 пин çын ытла шутланакан облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи парторганизацисене — партин кашни 10 пин членĕ пуçне ĕç тăвакан сасăпа пĕр делегат, парти членĕсем 10 пин çынран каярах шутланакан облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи парторганизацисене — ĕç тăвакан сасăпа пĕр кандидат.

Кунсăр пуçне, партин промышленноçлă пысăк центрсенчи горкомĕсене 134 горкома, чугунçул транспорчĕн узелĕсенчи 31 парторганизацине тата тинĕс флочĕпе шывçул флочĕн порчĕсенчи 27 парторганизацисене ĕç тăвакан сасăпа пĕрер мандат панă.

Конференци делегачĕсене, парти уставĕн 37-мĕш параграфĕ тăрăх, обкомсен, крайкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен пленумĕсенче суйланă. РСФСР, Украина ССР тата Белорусс ССР тăрăх партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине облаçсенчен, крайсенчен тата автономлă республикăсенчен янă делегатсене обкомсемпе крайкомсен пленумĕсенче суйланă, ытти союзлă республикăсем тăрăх — республикăсенчен, пĕтĕмĕшпе илсе, янă делегатсене союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен пленумĕсенче суйланă. Хуласенчи парторганизацисенчен, çавăн пекех чугунçул узелĕсенчи, тинĕспе юханшыв порчĕсенчи парторганизацисенчен янă делегатсене обкомсен, крайкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен пленумĕсенче суйланă.

Мандат Комиссийĕ делегатсен полномочийĕсене тĕрĕслесе тухса çакна палăртнă: пур парторганизацисенче те суйлавсене тĕрĕс, представительство нормисем тата суйлавсем валли çирĕплетнĕ йĕрке тăрăх ирттернĕ.

Мандат Комиссийĕ пур делегатсен полномочийĕсене те тĕрĕс тесе йышăннă.

Канашлакан сасăпа конференцие 138 çын килнĕ. Канашлакан сасăсене, парти уставĕн 37-мĕш параграфĕ тăрăх, вырăнти парторганизацисен уполномочийĕ тăрăх делегатсем пулса тăман ВКП(б) членĕсемпе кандидачĕсене, çавăн пекех Центральнăй ревизи комиссийĕн членĕсене тата союзлă наркоматсен халăх комиссарĕсене панă.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнчи делегатсене союзлă республикăсенчи 15 парторганизаци, автономлă республикăсенчи 20 парторганизаци, крайсенчи 6 парторганизаци, облаçсенчи 110 парторганизаци тата, çÿлте каланăччĕ эпĕ, хуласенчи 134 парторганизаци, чугунçул транспорчĕн узелĕсенчи 31 парторганизаци тата тинĕспе юханшыв флочĕсен порчĕсенчи 27 парторганизаци суйласа янă.

Партин XVIII съезчĕпе Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци хушшинчи тапхăрта, пирĕн тулашри политика тунă çитĕнÿсене пула, Совет Союзĕнчи халăхсен тăванлă çемьине союзлă пиллĕк çĕнĕ республика кĕчĕç. Çакна май пирĕн партконференцине Карело-Финн ССР, Литва ССР, Латви ССР, Эстони ССР тата Молдаван ССР парторганизацийĕсем пирвайхи хут хăйсен представителĕсене суйласа янă.

Çавăн пекех тата Украина СС Республикипе Белорусс СС Республикин хĕвеланăç облаçĕсенчи парторганизацисем те пирĕн конференцине пирвайхи хут хăйсен представителĕсене янă. **(Алă çупаççĕ).**

Темиçе сăмах — XVIII конференцин ĕç тăвакан сасă правиллĕ делегачĕсен составĕ çинчен.

Конференци делегачĕсен составĕнче — союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен секретарĕсем, парти крайкомĕсен, обкомĕсен, горкомĕсен тата райкомĕсен секретарĕсем, пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕн предприятисенчи парторгĕсем, транспорт политотделĕсен работникĕсем, предприятисен директорĕсем, совет, хуçалăх тата профсоюз органĕсен работникĕсем тата Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн работникĕсем.

Делегатсен составне мĕн чухлĕ вĕренни енчен кăтартса пама çак факта паллă тăвас пулать: 191 делегат аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем, аслă шкулсене вĕренсе пĕтермен тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă делегатсем 133 çын шутланаççĕ. Çапла ĕнтĕ, 324 делегат е конференци делегачĕсен пĕтĕм составĕн 71 процентĕ аслă шкулсемпе вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă.

Çак факта паллă тăвас пулать: 116 делегат е конференцин пĕтĕм составĕн тăватă пайĕнчен пĕр пайĕ —инженерсем. Парти стажĕ енĕпе илсен, конференци делегачĕсем çапла пайланаççĕ:

1917 çулччен кĕнисем 24 çын (5 процент), 1918 çулпа 1923 çул хушшинче кĕнисем 67 çын (15 процент), 1924 çулпа 1928 çул хушшинче кĕнисем 205 çын (45 процент), 1929 çулта тата унтан каярах кĕнисем 160 çын (35 процент).

Миçе çула çитни енчен илсе пăхсан, делегатсен составĕ çакăн пек:

35 çула çитнисемпе унтан çамрăкраххисем 163 çын (35,6 процент), 35 çултан пуçласа 40 çула çитнисем 195 çын (42,8 процент), 41 çултан пуçласа 50 çула çитнисем 90 çын (19,8 процент), 50 çултан асăраххисем 8 çын (1,8 процент).

Юлташсем, эпĕ вуласа панă даннăйсем çакна кăтартса параççĕ: партин XVIII съезчĕ пулнăранпа иртнĕ тапхăр хушшинче пирĕн парти татах та ытларах çирĕпленчĕ, партипе пирĕн халăхăн йышлă массисем хушшинчи çыхăнусем татах та ытларах сарăлчĕç.

Большевиксен партийĕ хăйĕн XVIII конференцийĕ тĕлне Ленинла-Сталинла Центральный Комитет тавра татах та таччăнрах пĕтĕçсе тăракан пĕрлĕхлĕ парти пулса тăчĕ. **(Алă çупаççĕ).**

* * *

Колхоз çуракине ăнăçлăн хатĕрленет

КАЛИНИНО. Юманайри «Коминтерн» колхоз çуракине ăнăçлăн хатĕрленет. Кашни бригадăрах машинăсене — плугсене, сÿресене, сеялкăсене юсаса пĕтернĕ. Плугсемпе сÿресем валли туртасем çителĕклĕ. Лаша кÿлмелли хатĕрсене — хăмăтсене, пăявсене, тилхепесемпе урхалăхсене икшер комплект хатĕрленĕ.

Удобренисем пухса хатĕрлесси те начар мар. Паянхи куна 210 тонна тислĕк, 372 лав юшкăн турттарса кăларнă. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 9 центнер, кĕл 54 центнер, 13 лав фекали хатĕрленĕ. Унсăр пуçне 205 центнер фосфорит çăнăхĕ кÿрсе килнĕ.

Акма кирлĕ вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа тасатнă. Вăрлăхсене турттарма кашни бригадăрах ещĕклĕ урапа тунă тата михсемпе шăналăксем çителĕклĕ хатĕрленĕ. Çитес кунсенче агрокружокран 30 колхозник вĕренсе тухаççĕ.

Т. Шапли.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ

Февралĕн 18-мĕшĕнчи ирхи ларăвăн дневникĕ

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн ирхи ларăвĕ **А. А. Андреев** юлташ председатель пулса ертсе пынипе уçăлнă. Ларура **Г. М. Маленков** юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклад тăрăх пренисем пынă.

Пренисенче малтан Киров завочĕн директорĕ (Ленинград) **И. М. Зальцман** юлташ сăмах илет. Хăйĕн выступленийĕнче вăл социализмлă промышленноçăн питех те пысăк проблемисенчен пĕри çинчен — производство командирĕсен кадрĕсене воспитани парса ӳстерес ĕç çинчен калать. Киров завочĕ программăна уйăхран уйăха, кварталтан кварталла тултарса пырать. Заводра ялан ĕçлекен кадрсем, уйрăмăнах производство командирĕсен кадрĕсене вĕрентсе çитĕнтерни программăна тултарса пыма чылаях пулăшнă. Заводра партипе хуçалăх руководстви кадрсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе, вĕсен пуçарулăхне, ответлăх туйăмне, хăйсем тĕллĕн ĕçлес пуçарулăхне аталантарса пырас тĕлĕшпе тăтăшах çине тăрса ĕçлет.

Киров завочĕ — машиностроенипе металлургин пысăк комбиначĕ. Çакна пула производство процесĕнчи ритмичность, цехсен ĕçĕсем пĕр-пĕринпе кирлĕ пек тĕрĕс сыхăнса пыни уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Мастер, бригадир, çӳлтен кăтарту парасса кĕтсе тăмасăр, ĕçре пуçарулăх кăтартаççĕ, хăйсен планне тултарассишĕн кăна мар, тата çак гигантла комбинатăн ытти звенисен ĕçĕшĕн те хăйсем ответлă пулнине туйса тăраççĕ. Заводра местничествăллă тенденцисене татăклăнах пĕтернĕ, пĕр тимлĕн ĕçлекен коллектив туса хунă, вăл коллектившăн социализмлă государство интересĕсем нимĕнрен те çӳлерех тăраççĕ.

Зальцман юлташ малалла васкавлă проектированин опычĕ çинчен каласа парать, çак метод Киров заводĕнче производствăна çĕнĕ техника кĕртмелли тĕп метод пулса тăнă. Конструкторсем стахановецсемпе, инженерсемпе, технологсемпе, мастерсемпе тачă çыхăнса ĕçлени — çĕнĕ техникăна хăвăрт вăйлатса пымалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул пулса тăрать. Çак çĕнĕ техникăна ывăнма пĕлмесĕр малалла илсе пырасси, ăна çĕнетсе лайăхлатса пырассишĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлесси — совет хозяйственникĕн пирвайхи обязанноçĕ, унăн социализмлă государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçлĕхĕ пулса тăрать.

— Çак тĕлĕшпе, — тет Зальцман юлташ, — пирĕн пурин те çĕнĕ техникăна аталантарса вăйлатса пырас тĕлĕшпе кунран-кун тăрăшса пыракан Сталин юлташран вĕренес пулать.

ВКП(б) Хабаровск крайкомĕн секретарĕ **Г. А. Борков** юлташ, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи промышленноçăн, транспортăн тата строительствăн çитĕнĕвĕсене паллă туса, çапла калать:

— Хабаровск крайне чăннипех те ĕнтĕ сталинла çĕнĕ стройка тесе ят панă. Кунта промышленноçăн чи кирлĕ те паха отраслисем шăпах ĕнтĕ сталинла пятилеткăсен çулĕсенче аталанса ӳснĕ. Крайри халăх хуçалăхне хуракан капиталовложени çулран çулах ӳссе пырать. Хабаровск крайне малалла аталантарса пырас ĕçри çитĕнӳсем вырăнта стройматериалсен хăватлă промышленноçне туса хума хушаççĕ, вăл промышленность кунран кунах ӳссе пыракан индустрине мĕн кирлине йăлтах парса тăма çителĕклĕ пулмалла, вырăнти шывçулĕсемпе тĕрĕс те пĕлсе усă курас пулать т. ыт. те.

— Украинецсен ĕлĕкхи халлапĕ, — тет юлашкинчен Борков юлташ, — çапла калать: «Камăн ашшĕ сывăхра, çав ывăлăн строительстви лайăх пырать». Эпир, Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи работниксем, Мускавран инçетерех пурăнатпăр пулсан та, парти, правительство, Сталин юлташ хăй пирĕншĕн кунсеренех тăрăшнине курса тăратпăр. Çакна пула эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр: хамăр умма лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕпĕр, Инçетри Хĕвелтухăçне чăннипех те социализмăн никам пырса тĕкĕнеймен крепоçĕ туса хурăпăр.

ВКП(б) Коломна хула комитечĕн секретарĕ **М. И. Малахов** юлташ транспорт машиностроенийĕн питех те пысăк предприятийĕн — Коломнăри Куйбышев ячĕпе тăракан заводăн ĕçне анализ туса парас.

Коломнăри парторганизаци пуринчен ытларах завод ĕçĕнче ритмичность туса хурас тĕлĕшпе ĕçлет. 1941 çулти январь уйăхĕнче парти горкомĕ завод ĕçне çирĕп график çине куçарас задача лартнă. Çак пĕтĕм ĕçе ытларах кая юлса пыракан цехсенче — турбинно-редукторнăй цехра тата паровоз цехĕнче пуçланă. Январь уйăхĕнче турбинно-редукторнăй цех плана 110 процент тултарнă. Февраль уйăхĕнче цех графика çирĕппĕн пăхăнса ĕçлесе пырать. Паровоз цехĕ те нарком çирĕплетсе панă графика пурнăçа кĕртсе пырать. Çаксем вĕсем Коломнăри заводăн ритмичнăй ĕçне организацилес тĕлĕшпе тунă пирвайхи утăмсем.

Хальхи вăхăтра Коломнăри парторганизаци партипе хуçалăх активне экономикăпа вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлет. Семинарсем, лекцисем туса ирттереççĕ. Çак ĕçĕн пирвайхи результачĕсем палăрма та пуçланă ĕнтĕ. Çапла, сăмахран, тепло-электровознăй цехра брак пысăк пулнă, ĕç укçи фончĕсене ытлашши расходласа пынă. Партипе хуçалăх работникĕсен цехри активĕ цех балансне тăтăшăнах сăнаса вĕренме тытăннă хыççăн, 1940 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче брак вăйлăн чакнă, ĕç укçи фончĕ тăрăх средствăсене перекетлеме пуçланă.

Малахов юлташ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕпе Йывăр машиностроени Халăх Комиссариачĕн ĕçĕсене критиклет, çак наркоматсем паровозсем тăвас ĕçри çĕнĕ техникăна аталантарса пырас ĕç çине, уйрăмăн илсен, тепловозсемпе хăвăрт çӳрекен локомотивсене ĕçе кĕртсе пырасси çине çителĕклĕ тимлĕхпе пăхмаççĕ.

Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **К. Я. Сярэ** юлташ çапла кăтартса парать: Конференци сӳтсе-явакан промышленноçпа транспорт ыйтăвĕсем советлă çамрăк Эстонири большевиксемшĕн те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Эстонири буржуази промышленноçа арканса каяс патнех çитернĕ. Кренгольмски мануфактура, Балтийский пир-авăр фабрики пек пысăк предприятисем хăйсен производствăллă мощноçĕн 25—30 проценчĕпе кăна усă курса ĕçленĕ. Суднăсем тăвакан Русско-Балтийский завода аркатса янă. Нумай предприятисем ĕçлемесĕр ларнă. Промышленноçăн тĕп изделисене Эстония ютçĕршывсенчен кӳрсе тăнă.

Совет влаçĕ туса хунăранпа çурçул хушшинче республика промышленноçа ура çине тăратас тĕлĕшпе питех те пысăк ĕç туса ирттернĕ. Иртнĕ çулти тăваттăмĕш кварталта республика промышленноçĕ пирвайхи хут план тăрăх ĕçленĕ, чылаях пысăк ӳсĕм тунă.

Промышленность производстви ӳссе пынипе пĕрлех, рабочисен хисепĕ те ӳссех пырать. Республикăра тĕпрен илсен ĕçсĕрлĕхе пĕтернĕ ĕнтĕ, хăшпĕр профессисем тăрăх квалификациллĕ рабочисем çителĕксĕрри сисĕнет.

Малалла производствăна, уйрăмăнах стройматериалсене тата вырăнти топливăна питех те вăйлăн ӳстермелле. Эстонире сланецсен питех те пысăк запасĕсем пур, вĕсене кăларас тата вĕсенчен кирлĕ япаласем хатĕрлес ĕç çывăх çулсенчех вăйлăн ӳсет.

Партире тăракан тата партире тăман большевиксем хушшинчен кадрсем суйласа илес тата вĕсене пысăкрах ĕçе уйăрса лартас ĕç Эстони СС Республикишĕн питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Сярэ юлташ çĕнĕ çынсене хуçалăх ĕçĕнчи ертсе пыракан вырăнсене хăюллăн уйăрса лартма кирли çинчен калать.

Промышленность ĕçĕнче, продукцин хăйне ларакан хакне чакарас ĕçре тата продукци пахалăхне хăпартас ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха.

Социализмлă общество продукци пахалăхĕ тĕлĕшпе, капитализмлă общество пек мар, нумай пысăкрах требованисем лартнине хăшпĕр юлташсем ăнланса илмен-ха.

Сярэ юлташ хăйĕн сăмахĕн вĕçĕнче çапла калать:

—ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата Сталин юлташ хăй пире питех те пысăк пулăшу параççĕ, пирĕншĕн пысăк тимлĕхпе тăрăшаççĕ. Эстонири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ ВКП(б) Центральный Комитечĕпе аслă Сталин тавра тачă пĕтĕçсе тăракан парти пулса тăрать, ăна Эстонири коммунистла партин IV съезчĕ питех те уççăн кăтартса пачĕ.

Малалла Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **П. К. Пономаренко** юлташ сăмах илет.

— Партин XVIII съезчĕ хыççăн,—тет Пономаренко юлташ, — Белоруссири промышленность пĕрмаях малалла ӳссе пычĕ. Хĕвеланăç облаçĕсенчи промышленность уйрăмăнах пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пырать.

Пономаренко юлташ хăйĕн сăмахĕнче пуринчен ытларах промышленность ĕçĕнчи, уйрăмăнах вăрман промышленноçĕн ĕçĕнчи, çитменлĕхсене кăтартса парать. Вăрманта халĕ те механизмсемпе начар усă кураççĕ-ха. Каснă вăрмана ансăр чугунçулсем тăрăх турттарни автомобиль транспорчĕн средствипе тата тракторсемпе турттарнинчен темиçе хут йӳнерех ларать, апла пулсан та ансăр чугунçулсем хывас ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ.

Пономаренко юлташ Белоруссире лесохимине, торф кăларас тата торфран кирлĕ япаласем туса хатĕрлес ĕçе малалла вăйлатса пырасси çинчен ыйту лартать. Инçетрен кӳрсе килекен топливăпа усă курас вырăнне, ытларах та ытларах торфпа усă курма пуçлаççĕ, анчах та торф кăларас ĕçе начар механизацилени пула, вăл çĕркăмрăкĕнчен нумай хаклăраха ларать-ха. Торфа брикетировани, гидролиз тăвас тата газификацилес ĕçе анлăн лартас пулать. Торф газĕсенчен шĕвĕ топливо питех те нумай хатĕрлеме пулать.

Малалла Казахстанри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **Н. А. Скворцов** юлташ тухса калать.

— Халĕ ĕнтĕ Казахстан шултра ялхуçалăхлă тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн республики кăна мар, — тет Скворцов, — тата вăйлăн ӳссе аталаннă промышленность республики пулса тăрать. Казахстанра уйрăмăнах цветной металлурги, çĕркăмрăк, нефть, хими, пулă промышленноçĕ вăйлăн аталаннă.

Оратор промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕплĕн сӳтатса парать, çитменлĕхсен сăлтавĕ — парти организацийĕсемпе наркоматсем предприятисене начар ертсе пыни пулса тăрать, тесе кăтартса парать.

Парти горкомĕсемпе обкомĕсем предприятисен ĕçне тарăннăн асăрхаса контроллесе тăман, промышленность ĕçĕн ыйтăвĕсене сӳтсе-явас ĕç часчасах формально пулса пынă. Хăшпĕр парторганизацисем тĕрĕс решенисем йышăнаççĕ, анчах вĕсене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тĕрĕслемеççĕ. Ĕç нормисене тăтăшах тултарса пыман коммунистсем тĕлĕшпе пуçламĕш парторганизацисем çителĕклĕ требованисем лартмаççĕ.

Скворцов юлташ предприятисене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсемшĕн цветной металлурги наркоматне хытă критиклет. Наркомат аппарачĕ вырăнти парторганизацисем кăларса тăратакан ыйтусем çине çителксĕр çавăрăнса пăхать.

ВКП(б) Ростов обкомĕн секретарĕ **Б. А. Двинский** юлташ çапла калать:

— Ростов облаçĕнчи промышленность та çĕршыври пĕтĕм промышленноçпа пĕрлех аталанса пынă. Вырăнти парторганизацисем промышленноçпа транспорт еннелле вăхăтра çавăрăннă пулсан тата парти директивисене пурнăçа кĕртсе пынине куллен кунах тĕрĕслесе тăнă пулсан, промышленность çитĕнĕвĕсем нумай пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Облаçри промышленность пĕр пек ĕçлесе пымасть. Талăкри графика тултарса пырасси обязательнăй правило пулса тăман-ха.

Двинский юлташ предприятисене материалсем парса тăрас ĕçе йĕркелесе ярасси çинчен ыйту кăларса тăратать. Предприятисем умне сроксем, комплектность тата ассортимент çинчен требованисем тăратаççĕ, — çакăнпа пĕрлех наркоматсемпе главксем предприятисем валли материалсене вăхăтра тата комплектлăн парса тăрас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине çирĕппĕн контроллесе тăни те кирлĕ.

— Вырăнсенчи совет органĕсем, — тет Двинский юлташ, — вырăнти промышленность енĕпе, хăш чухне республика промышленноçĕ тĕлĕшпе те ĕçлеççĕ, союзлă промышленность ыйтăвĕсем вара пĕтĕмĕшпех парти органĕсен компетенцийĕ пулса тăнă. «Ĕçе çапла пайлани» тĕрĕс мар. Вырăнсенчи совет органĕсем пĕтĕм промышленность тĕлĕшпе — союзлă, республикăллă, вырăнти промышленность тĕлĕшпе пуринпе те ĕçлеме тивĕçлĕ. Хăй черечĕпе, республика правительстви промышленность умне лартнă задачăсенчен тухса тăракан мерăсене йышăнма тивĕçлĕ.

Двинский юлташ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн политуправленине руководствăри канцелярла-бюрократла методсемшĕн хытă критиклет.

ВКП(б) Тутар обкомĕн секретарĕ **А. М. Алемасов** юлташ хăйĕн сăмахĕнче автономлă республикăсенчи промышленноçлă наркоматсен ĕçĕ çинчен ыйту кăларса тăратнă. Автономлă республикăсенчи халăх комиссарĕсем, Алемасов юлташ каланă тăрăх, материальнăй снабженипе планировани ыйтăвĕсене татса пама пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен çак пĕтĕм ыйтусене татса парасси чăннипе илсен йăлтах главксенчен килет. Çапла, сăмахран, Хусанта РСФСР Çăмăл промышленность Наркоматне пăхăнса тăракан 5 çĕвĕ фабрики пур. Çак фабрикăсенчен пĕринче пир-авăрсем ытлашши пулсан, тепринче вĕсем çук пулсан, Тутар АСС Наркомлегпромĕ çак ытлашши материалсене РСФСР Наркомлегпромĕ ирĕк памасăр тепĕр фабрикăна куçарма пултараймасть.

Карело-Финн СС Республикинчи Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ **Г. Н. Куприянов** юлташ Союзлă çĕнĕ республикăри промышленность тунă çитĕнӳсем çинчен калакан цифрăсене илсе кăтартнă. 1940 çулта республикăри промышленность продукци туса кăларасси кварталтан кварталах ӳссе пынă. Тăваттăмĕш кварталта республика тăрăх, çĕнĕ районсене пĕрле илсе шутласан, промышленность туса кăларакан продукци хисепĕ 70 процента яхăн ӳснĕ.

Çĕнĕ районсенче белофинсем çĕмĕрсе хăварнă предприятисене юсаса ĕçе ярас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Хальхи вăхăтра çак предприятисене пурне те пекех ĕçе янă, вĕсем продукци параççĕ.

Куприянов юлташ вăрман промышленноçĕ наркомачĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинче тĕплĕн чарăнса тăрать.

Куприянов юлташ выступленийĕ хыççăн, председатель пулса ертсе пыракан **Андреев** юлташ **Маленков** юлташ доклачĕ тăрăх тезиссене пĕтĕмĕшпе илсе йышăнма, тӳрлетӳсемпе хушусене пăхса тухма, çавăн пекех тата Маленков юлташ доклачĕ тăрăх йышăнмалли резолюцин татăклă текстне хатĕрлеме комисси суйлама сĕнӳ парать.

Çак сĕнĕве конференци пĕр саслă пулса йышăнать.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ Андреев юлташ комиссине çакăн пек составпа суйлама сĕнӳ парать:

Маленков, (комисси председателĕ), **Алемасов, Андреев, Аношин, Арутинов, Багиров, Берия, Борков, Бородин, Булганин, Бурмистенко, Вагов, Вознесенский, Ворошилов, Двинский, Жданов, Задионченко, Зальцман, Л. М. Каганович, Калинин, Калнберзин, Кузнецов, Куприянов, Малахов, Микоян, Молотов, Пальцев, Патоличев, Пегов, Пономаренко, Попов, Протопопов, Родионов, Седин, Скворцов, Снечкус, Сталин, Сярэ, Тевосян, Фомин, Хрущев, Чарквиани, Шверник, Щербаков, Юсупов** юлташсем.

Комисси составне пĕр саслă пулса çирĕплетеççĕ. (ТАСС).

Февралĕн 18-мĕшĕнчи каçхи ларăвăн дневникĕ

Конференцин февралĕн 18-мĕшĕнчи **каçхи** ларăвĕнче **Г. М. Маленков** юлташăн докладне малалла сӳтсе-явнă. Председатель пулса ертсе пыраканĕ **А. А. Андреев** юлташ КП(б)У Центральный Комитечĕн секретарьне **М. А. Бурмистенко** юлташа сăмах парать.

Бурмистенко юлташ единоначали мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен, предприятисенчи партработниксемпе предприятисен директорĕсем хушшинчи отношенисем çинчен калать. Çак отношенисем яланах мар пĕр-пĕрне пулăшу панă никĕс çинче, пĕр-пĕринчен лайăххах ĕçлеме ыйтнă никĕс çинче пулса пыраççĕ, час-часах вĕсем пĕр-пĕрне амнистисем панă атмосферăра пулса иртеççĕ. Директорпа партком хушшинчи ответлăх мĕнле пулмаллине çителĕклĕ таран палăртса хуманни çакăн патне илсе пырать: директор е партком, йăнăш туса, пĕр-пĕрин хыçне пытанма, ответлăха хăйсем çинчен сирсе яма тăрăшаççĕ. Пирĕн, парти работникĕсен, тет Бурмистенко юлташ, çакна ăнланса илес пулать: директор предприятин тулли влаçлă руководителĕ пулса тăрасси наркоматпа главкран кăна мар, пирĕнтен те нумай килет.

Малалла Бурмистенко юлташ предприятисенче оборудованипе усă курасси çинчен тăракан ыйту çине куçать, çак облаçра мĕнтери пысăк майсем пуррине нумай примерсемпе кăтартса парать.

Оратор çĕнĕ рабочисене, çавăн пекех тата заводсенчен инçетре, ялсемпе хула хĕррисенчи вырăнсенче пурăнакан рабочисене политикăллă воспитани парас задачăсем çинче чарăнса тăрать.

ВКП(б) Горький обкомĕн секретарĕ **М. И. Родионов** юлташ промышленноçри планировани çитменлĕхĕсене критиклет. Наркоматсем плансене питех те кая юлса çирĕплетеççĕ, час-часах улăштараççĕ.

Родионов юлташ шутланă тăрăх, кунта тепĕр машинăна пĕрле туса хатĕрлес шутпа, заводсен кооперированийĕн практикине хăшпĕр улшăнусем кĕртме кирлĕ. Горький хулине детальсем Ленинградран, Ржевран тата ытти нумай хуласенчен пыраççĕ, çав детальсене пурне те Горькири предприятисенчех туса хатĕрлеме пулать. Ун чухне транспорт çине кирлĕ мар ĕç тиемелле мар пулнă пулĕччĕ, кая юлса пынине детальсене вăхăтра ярса паманнипе ăнлантарса пама сăлтав пулман пулĕччĕ.

Малалла Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕн секретарьне **А. Ю. Снечкус** юлташа сăмах параççĕ.

Литвари коммунистсем, — тет Снечкус юлташ хăйĕн сăмахĕн пуçламăшĕнче, — 20 çул хушши ытла вăртăн ĕçлесе, буржуази влаçне хирĕç кĕрешнĕ. Аслă чăнлăх — большевикла парти чăнлăхĕ, Марксăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн чăнлăхĕ çĕнтерчĕ. Литва халăхĕ социализм ялавĕ айне тăчĕ!

Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ V съезчĕ большевикла критикăпа самокритикăна анлăн сарса, янă никĕс çинче пулса иртрĕ, парти Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕшĕн татăклăн кĕрешме пултарнине кăтартса пачĕ.

Совет влаçĕ туса хунă хыççăн республикăра мĕнпур шултра промышленноçа, çĕре, шултра суту-илĕве, пысăк çуртсене, банксене, транспорта тата çыхăну ĕçĕн средствисене национализациленĕ. Сахал çĕрлĕ тата çĕрсĕр хресченсемпе батраксем çĕр илчĕç, çав çĕрĕн тулли правăллă хуçисем пулса тăчĕç.

Литва Советлă Социализмлă Республикине туса хунăранпа кĕске срок хушшинчех промышленноçлă 902 предприятине, 30 пин рабочи ĕçленĕ предприятине национализациленĕ. 23 пин предприятине çĕнĕрен ĕçе янă. Промышленноçра ĕçлекен рабочисен хисепĕ 8.500 çын чухлĕ ӳснĕ.

Халăх хуçалăхĕн 1941 çулти планĕ тăрăх капитальнăй ĕçсем 1939 çултинчен 6 хут пысăкрах пулаççĕ. Халăх хуçалăхĕн 1941 çулти планĕ 631 миллион тенкĕлĕх — буржуаллă Литвара 1939 çулта пулнинчен пĕрре çурă хут нумайрах — продукци туса кăларма палăртать.

— Литвари коммунистла парти, — тет Снечкус юлташ, — халăх хуçалăхĕн 1941 çул валли палăртнă планне тултарассине пурнăçа кĕртнĕ, мĕншĕн тесен пире куллен кунах ВКП(б) Центральный Комитечĕ тата пирĕн аслă çулпуç Сталин юлташ ертсе пырать!

Унтан ВКП(б) Челябинск обкомĕн секретарĕ **Г. Д. Сапрыкин** юлташ тухса калать, Маленков юлташ докладĕнче Челябинск парторганизацине критиклени тĕрĕс тесе йышăнать.

Обком ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен сăмах тапратса, Сапрыкин юлташ çапла калать:

— Çитменлĕхсене пытарма кирлĕ мар, решенисем нумай пулнă, анчах та вĕсене пурнăçа кĕртмен, заводсен руководителĕсем ĕçе тума пулса сăмах пани çине шанса тăнă.

Трибуна çинче — ВКП(б) Сталинград обкомĕн секретарĕ **А. С. Чуянов** юлташ.

— Облаçри парторганизаци, — тет вăл, — промышленноçпа транспорт ыйтăвĕсем еннелле кирлĕ пек çавăрăнман. Хăшпĕр парторганизацисем производство экономикипе тарăннăн паллашма, малта пыракан стахановецсен, инженерно-технически работниксен опычĕпе тата пуçарулăхĕпе большевикла усă курма пуçланă çĕрте предприятисен ĕçĕ чылаях лайăхланнă. Орденлă «Красный Октябрь» ятлă металлурги заводĕнче, Сталинградри трактор заводĕнче тата ытти предприятисенче оборудованисене тĕрĕслес тĕлĕшпе обществăллă смотр туса ирттерни питех те паха результатсем панă. Сталинградри трактор заводĕнчи комсомолецсем питех те паха пуçарулăх кăтартнă, вĕсем топливăна, метала, электроэнергине перекетлесси çинчен, станокпа инструмента тирпейлĕ тыткаласси çинчен чĕнсе каланă. Çак пуçарăва ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, вăтам машиностроени наркомачĕ тата ытти организацисем те ырланă, комсомолецсен опытне сарма пулăшнă. Комсомолецсем чĕнсе каланипе массăллă движени пуçланнă. Чуянов юлташ çак движенин пирвайхи çитĕнĕвĕсем çинчен калакан паха цифрăсемпе фактсене илсе кăтартать.

Чуянов юлташ выступленийĕ хыççăн председатель пулса ертсе пыраканĕ **А. А. Андреев** юлташ çапла пĕлтерет: Маленков юлташ доклачĕ тăрăх пренисенче 31 çын тухса каланă тата пренисене чарса лартасси çинчен сĕнӳ панă. Çак сĕнĕве конференци йышăнать. А. А. Андреев юлташ малалла çапла пĕлтерет: пренисенче тухса каланă юлташсем тезиссемпе доклада хирĕç нимĕн те каламаннине кура, Маленков юлташ юлашки сăмах тухса калама шутламасть.

Мандат комиссийĕн докладне тума **Н. Н. Шаталин** юлташа сăмах параççĕ.

Докладчик ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн делегачĕсен составне кăтартса паракан цифрăсене вуласа парать. Ĕç тăвакан сасăллă 457 делегатран 456 делегачĕ конференцине килнĕ (пĕр делегат чирлĕ пулнипе килеймен), çак делегатсем партин 2.515.481 членĕн тата парти членĕсен 1.361.404 кандидачĕн представителĕсем пулса тăраççĕ. ВКП(б) XVIII съездĕнче пулнă делегатсем партин 1.588.852 членĕн тата парти членĕсен 888.814 кандидачĕн представителĕсем пулса тăнă. Çапла ĕнтĕ, ВКП(б) XVIII съезчĕ пулнăранпа иртнĕ икĕ çул хушшинче парти ретĕнчи çынсен хисепĕ 1.399.219 çын чухлĕ ӳснĕ.

Рабочисен, хресченсен, совет интеллигенцийĕн массисем хушшинче большевикла парти авторитечĕ калама çук вăйлăн ӳсни çинчен, партипе халăх хушшинчи çыхăнусем нихăçан пулман пек çирĕпленни çинчен калакан çак цифрăсене саламласа, конференци делегачĕсем нумайччен алă çупаççĕ.

Конференци делегачĕсене пур çĕрте те парти уставĕ тăрăх тата представительствăн çирĕплетсе панă нормисем тăрăх суйлани çинчен пĕлтерсе, докладчик çапла калать:

— Партин XVIII съезчĕ пулнăранпа иртнĕ вăхăт хушшинче, Совет Союзĕн тулашри политики тунă çитĕнӳсене пула, ССР Союзĕнчи халăхсен тăванлă çемьине çĕнĕрен союзлă 5 республика кĕнĕ. Карело-Финн, Литва, Латви, Эстони тата Молдаван СС Республикин парторганизацисен тата Украинăпа Белоруссин хĕвеланăç облаçĕсенчи парторганизацисен представителĕсем пирĕн конференцие пирвайхи хут килнĕ.

Залра каллех вăйлăн алă çупаççĕ.

Докладчик ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн делегачĕсен составне тĕплĕ анализ туса парать, вĕсем мĕн чухлĕ вĕренни çинчен, вĕсен партстажĕ çинчен, вĕсем миçе çула çитни çинчен каласа парать.

— Пирĕн парти, — тет вăл делегатсем нумайччен алă çупнă майăн, — ӳсрĕ, çирĕпленчĕ, партипе халăх массисем хушшинчи çыхăнусем анлăланчĕç. Хăйĕн XVIII конференцине большевикла парти Ленинла-Сталинла Центральный Комитет тавра таччăн пĕтĕçсе тăракан пĕрлĕхлĕ парти пулса килчĕ.

Конференци мандат комиссийĕн докладне пĕрсаслă пулса çирĕплетет, **Г. М. Маленков** юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклад тăрăх резолюци çирĕплетме тытăнать. Ирхи ларура суйланă комисси ячĕпе **Г. М. Маленков** юлташ доклад тезисĕсене конференци резолюцийĕ вырăнне йышăнса çирĕплетме сĕнӳ парать.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ **А. А. Андреев** юлташ çак сĕнĕве сасăлама тăратать, унтан çапла пĕлтерет:

— Çапла ĕнтĕ, конференци кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх резолюцине пурте пĕрсаслă пулса çирĕплетнĕ.

Конференци кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйту çине — «Хуçалăхăн 1940 çулти итогĕсем тата 1941 çулта ССР Союзĕн халăх хуçалăхне аталантармалли план» çинчен тăракан ыйту çине куçать. Доклад тума ССР Союзĕн Совнарком Председателĕн заместительне тата Государство План Комиссийĕн председательне **Н. А. Вознесенский** юлташа сăмах параççĕ. Вознесенский юлташа алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Вознесенский юлташăн докладне, хуçалăх строительствин иртнĕ çулти итогĕсене туса паракан тата 1941 çулти промышленность, ялхуçалăх, транспорт тата капитальнăй строительство ĕçĕнчи питех те пысăк задачăсене палăртса хуракан докладне, делегатсем пысăк тимлĕхпе интересленсе итлеççĕ.

— Пирĕн çитĕнӳсем аслă та чаплă, — тет Вознесенский юлташ хăйĕн доклачĕн вĕçĕнче. — Çак мĕнпур çитĕнӳсемшĕн эпир большевикла партин Центральный Комитетне тав тума тивĕçлĕ, хамăрăн Сталина тав тума тивĕçлĕ!

Конференцири çынсем пурте ура çине тăраççĕ, партин Центральный Комитетне чысласа, социализмăн мĕнпур çĕнтерĕвĕсен организаторне тата вăл çĕнтерӳсене хавхалантарса пыракана— Сталин юлташа чысласа хĕрӳллĕ оваци тăваççĕ. Залра пур енчен те саламласа каланă сăмахсем янăра-янăра илтĕнеççĕ:

— Сывă пултăр Сталин юлташ!

Çакăнпа конференцин февралĕн 18-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕ хупăнать.

Çитес лару февралĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла 11 сехетре пулать. (ТАСС).

Ĕççыннисем Маленков юлташ докладне сӳтсе-яваççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, февралĕн 18-мĕш. **(Телефонпа хамăр корр.).** Древкомбинатри рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Маленков юлташ тунă доклада пысăк тимлĕхпе сӳтсе-яваççĕ. Цехсенче сменăсем хыççăн е канмалли вăхăтсенче агитаторсем рабочисене Маленков юлташ докладне вуласа параççĕ, тĕплĕн каласа ăнлантараççĕ.

Паян 3-мĕш №-лĕ цехра Шоркинпа Анисимов агитаторсем кăнтăрлахи перерыв вăхăтĕнче каласу туса ирттерчĕç тата Маленков юлташ докладне вуласа пачĕç. Рабочисем докладра асăннă фактсем комбинатра та пурри çине кăтарса параççĕ. Смена мастерĕ Байняшев юлташ çапла калать:

— Пирĕн комбинатра аггрегатсемпе, станоксемпе туллин усă курмаççĕ. Пирĕн цехра, сăмахран, сверлильнăй станоксем пĕтĕмпе 4, анчах вĕсем кашни кунах пĕрер сехет ахаль лараççĕ, мĕншĕн тесен вĕсемпе туллин ĕçлеме материал çителĕклĕ тăратмаççĕ. 4-мĕш №-лĕ цехра трехвальнăй станок пур, вăл чылай вăхăт хушши ĕнтĕ ахаль ларать. Ку станок пире питĕ кирлĕ. Анчах темшĕн ăна пирĕн цеха куçармаççĕ. Малалла пур станоксемпе те туллин усă курсан, продукци туса кăларассине эпир чылай ӳстерме пултаратпăр.

Специалистсемпе те кирлĕ пек усă курмаççĕ. Чылай чухне вĕсене производствăра усă курас вырăнне канцелярисенче ĕçлеттерсе лартаççĕ.

— Матвеева юлташ лесотехнически техникумран вĕренсе тухнă, вăл техник. Унăн вырăнĕ производствăра пулмалла, анчах вăл канцеляринче статистик пулса ĕçлет. Малашне ĕнтĕ ун пек пăтраштарусем пулмĕç. Кун çинчен Маленков юлташ докладĕнче аван кăтартса панă, — тет нормировщик Константинов юлташ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн материалĕсене ытти цехсенче те активлăн сӳтсе-яваççĕ, Маленков юлташ докладне тĕплĕн вĕренеççĕ.

Партконференци решенийĕсемпе хавхаланса

ÇĔРПУ, февралĕн 17-мĕш. **(Телефонпа).** Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнине районри ĕççыннисем пысăк тимлĕхпе кĕтсе илчĕç. Тавăшкассинчи «Коминтерн» тата «Дружба», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ Маленков юлташ партконференцинче «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» туса панă доклада пĕрле пухăнса радио тăрăх итленĕ.

«Çамрăк вăй» колхозра тата районри почта конторинче ĕçлекенсем Маленков юлташ докладне вĕренме тытăннă.

Мускаври заводсенче

Мускаври ĕççыннисем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин ĕçĕсене пысăк тимлĕхпе сăнаса пыраççĕ. «Красный пролетарий» станкостроительнăй заводра кăнтăрлахи перерыв вăхăтĕнче цехсенче пуринче те Маленков юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклада сӳтсе-яваççĕ.

— Маленков юлташ доклачĕ, — тенĕ пĕрремĕш механически цехри мастер Конкин юлташ,—промышленность тата транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтĕмпех тĕплĕн уçса пачĕ. Ку çитменлĕхсем пирĕн заводра та пур. Эпир, мастерсем, участоксенче тивĕçлĕ хуçасем пулса тăрайман-ха, хăш чухне детальсем патне чупса вăхăта ирттеретпĕр, организациллĕ-техникăллă тата ытти ыйтусене манса хăваратпăр. Маленков юлташ тĕрĕс калать, мастера хăйне тивмен тĕрлĕ обязанноçсенчен хăтармалла.

«Каучук» заводри стахановецсемпе ударниксем ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăлнă ятпа производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Вуннăмĕш номерлĕ цехри токарьсен сменине ертсе пыракан мастер коммунист Галанин юлташ ĕçе стахановла организациленĕ. Вăл сменăри токарьсем ĕнер ятарласа панă уйăхри заданине тултарнă. Çавăн пекех, 9-мĕш номерлĕ цехри Киреева, Назарова, Прохоренко т. ыт. работницăсем те пысăк тухăçлă ĕçĕн паха тĕслĕхне кăтартаççĕ, вĕсем нормăна 150 процент ытла тултарса ĕçлеççĕ.

(ТАСС).

ПĔТĔМ СОЮЗРИ XVIII ПАРТКОНФЕРЕНЦИ

Маленков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюцин вĕçĕ

9. Малалла, çакна туни кирлĕ: пирĕн предприятисенче **технологи процесĕнчи çирĕппрен те çирĕп дисциплинăна** пăхăнмалла тăвас пулать, мĕнпур предприятисенче технологиллĕ процессен тĕрĕс инструкцийĕсене ĕçе кĕртмелле, вĕсене пăхăнса пынине контроллесе тăмалла тата, çапла вара, çирĕплетсе панă стандартсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшӳллĕ, **лайăх пахалăхлă тата комплектлă продукци туса кăлармалла тăвас пулать.**

Парти организацийĕсен, предприятисемпе наркоматсенчи работниксен çакна ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ: пирĕн предприятисем çĕнĕ тата тĕп-тĕрĕс техникăпа хĕçпăшалланнă, çав механизмсем ĕнтĕ производствăра питех те çирĕп йĕрке туса хума, техника правилисемпе инструкцисене тĕп-тĕрĕс пăхăнса ĕçлеме хушаççĕ, халĕ ĕнтĕ кивĕлле, аран-аран, мĕшĕлтетсе, чухăмăн ĕçлеме юрамасть.

Парти организацийĕсем СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «Пахалăхсăр е комплектлă мар продукци кăларнăшăн тата обязательнăй стандартсене пăснăшăн промышленноçлă предприятисем ответлă пуласси çинчен» 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымалла тума тивĕçлĕ.

10. Малалла, çĕнĕ техника ыйтăвĕсем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, **техникăна çĕнетсе лайăхлатас, çĕнĕ машинăсем, материалсем тата изделисем тăвас ĕçе вĕренсе çитес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлемелле.**

Парторганизацисен, промышленноçри тата транспортри работниксен техникăллă шухăша чечеклентерме тата техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене производствăна хăвăртрах кĕртме социализмлă строй паракан питех те пысăк майсемпе пĕтĕмĕшпех усă курмалла.

Предприятисен руководителĕсен пĕр пайĕ çĕнĕ техника çине хвостистла, тĕпренех оппортунизмла пăхнине пĕтермелле, мĕншĕн тесен çавăн пек консерватизм производствăна малалла аталантарса пыма чăрмантарать, предприятисене кая юласси тата пĕр вырăнта тăрасси патне илсе пырать, çĕршывăн оборонăллă вăй-хăватне сиен кӳрет.

11. Малалла, **туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакне** тăтăшах **чакарса пымалла,** хозрасчета пур майсемпе те çирĕплетсе пымалла, тирпейсĕрлĕхе татăклăнах пĕтерсе хумалла.

Предприятисен ĕçне тĕрĕс ертсе пырас шутпа, хăйне ларакан хакăн тĕп элеменчĕсем тăрăх—ĕç укçи, чĕртавар, топливо тата электроэнерги хакĕ, амортизациленĕшĕн начислени туни, администрацире управлени расхочĕсем тăрăх—пĕр япалана тума чăннипе мĕнчухлĕ расход тухнине пĕлмелле, предприятин экономика тĕлĕшĕнчи ĕçне çакăн пек туса пымалла: хăйне ларакан хакпа тупăш илес тĕлĕшпе тунă плансем пĕтĕмпех пурнăçа кĕччĕр.

12. Малалла, **ĕç укçи тĕлĕшĕнче** рабочисене ĕç тăрăх, ертсе пырас ĕçри работниксене премиллĕ система тăрăх тата квалификациллĕ ĕçшĕн квалификацисĕр ĕçрен нумайрах тӳлесе, **лайăх ĕçлекенсене материально хавхалантарса пырас принципа çирĕппĕн тата çине тăрса пурнăçа кĕртсе пымалла.**

Ĕç укçи тĕлĕшĕнчен уравниловкăн çĕрĕк практикине вĕçне çитиех пĕтермелле тата çакна пурнăçа кĕртмелле: ĕç тухăçлăхне хăпартас ĕçре, апла пулсан, пирĕн пĕтĕм халăх хуçалăхне вăйлатас ĕçре те сдельщинăпа премиллĕ система татах та ытларах паха та пысăк рычагсем пулса тăмалла.

13. Малалла, **прогулсене йăлтах пĕтермелле.**

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ «Сакăр сехетлĕ ĕç кунĕ çине, çичĕ кунлă ĕç эрни çине куçасси тата рабочисемпе служащисене предприятисемпе учрежденисенчен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайма чарасси çинчен» 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указа пурнăçа кĕртни предприятисенчи ĕç дисциплинине чылаях çирĕплетрĕ. Анчах та фабрикăсенче, заводсенче, рудниксенче, шахтăсенче, чугунçулсем çинче прогулсем тата ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухса каяссисем çаплах пĕтмен-ха.

Парти организацисем, профсоюзсем, промышленноçпа транспорт работникĕсем, ĕç вăйĕ улшăнса тăнипе прогулсене хирĕç кĕрешес задача кĕске вăхăтлăх кампани мар пулни çинчен тата вăл задача массăсем хушшинче куллен-кун ĕçлесе пыма хушни çинчен асра тытса, промышленноçпа транспортри ĕç дисциплинине çирĕплетсе пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлемелле.

14. Малалла, **предприятисенче единоначалине татăклăнах çирĕплетмелле,** предприяти директорĕ ĕçре тулли влаçлă руководитель, предприяти ĕçĕсемшĕн тата производствăри йĕркелĕхшĕн пĕтĕмĕшпех ответлă руководитель пулса тăмалла тăвас пулать.

15. Малалла, **предприятисенче** производствăна **техника енчен ертсе пырас ĕçе** пур майсемпе те **çирĕплетмелле.**

Центрти тата вырăнти хуçалăх учрежденийĕсенче тата заводоуправленисемпе шахтоуправленисенче ĕçлекен инженерсемпе техниксен пĕр пайне предприятисене, цехсене, шахтăсенчи, çĕр айĕнчи ĕçсене тума ямалла.

16. Предприятисенче производствăна тӳррĕмех организацилекенĕ пулса тăракан **мастерăн рольне хăпартмалла** тата ĕçе çапла йĕркелесе ямалла: мастер производствăн хăйне шанса панă участокĕнче тулли правăллă руководитель, технологи дисциплинине пăхăнса ĕçлессишĕн тата производство заданине пур показательсем тăрăх та тултарассишĕн пĕтĕмĕшпех ответ тытакан руководитель пулса тăмалла.

17. Аслă шкулсенчен вĕренсе тухакан çамрăк специалистсем тĕлĕшпе çакăн пек йĕрке туса хумалла: аслă шкултан вĕренсе тухнă кашни специалист предприятире производствăллă опыт илмелле, обязательнăй йĕркепех практикăллă ĕçĕн—мастер помощникĕн, мастерăн, цехри инженерăн стажне ĕçлесе иртермелле.

IV.

ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ПРОМЫШЛЕННОÇПА ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШĔНЧИ ОРГАНИЗАЦИЛЛĔ ЗАДАЧИСЕМ

Промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тесен, парторганизацисен организациллĕ задачисем енĕпе мĕнле мерăсем йышăнмалла-ха?

1. Промышленноçпа транспорт наркомачĕсене тата предприятийĕсене пулăшу парас ĕçе вăйлатас шутпа, **промышленность ытларах аталаннă хуласенче, облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче, хулари, облаçри, крайри, республикăри** промышленноçăн тĕп отраслисене кура, горкомсен, обкомсен, крайкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕсем пĕрре мар, темиçе секретарь пулмалла, çавăн пекех тата, кирлĕ çĕрте, чугунçул транспорчĕ енĕпе ĕçлекен секретарь тата шывçул транспорчĕ енĕпе ĕçлекен секретарь пулмалла.

Промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен секретарьсем предприятисенче мĕн пулса пынине лайăх пĕлмелле, вĕсенче тăтăшах пулмалла, предприятисен работникĕсемпе те, çавăн пекех тивĕçлĕ наркоматсемпе те тӳррĕмех çыхăнса тăмалла, плансене тата партин промышленноçпа транспорт тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре вĕсене пулăшу памалла, çав решенисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, предприятисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене уçса кăтартмалла тата вăл çитменлĕхсене пĕтерессине пурнăçа кĕртме тăрăшмалла.

2. Парти организацийĕсем **промышленность предприятийĕсенчи тата чугунçулсем çинчи ертсе пыракан хуçалăхла работниксемпе инженерла-техникла работниксене сăнаса вĕренсе, лайăх пĕлсе тăмалла.**

Пултарулла та пуçарулла работниксене, лайăх организаторсене, уйрăмăнах, хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен инженерсен шутĕнчен, заводсенчи, фабрикăсенчи, чугунçулсем çинчи ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме хăюллăн уйăрса лартмалла.

Партире тăман çынсем хушшинче пултарулла тата тӳрĕ кăмăллă çынсем нумай пуррине, вĕсем партире тăмасçĕ тата вĕсен стаж çук пулсан та, вĕсем стажлă хăшпĕр коммунистсенчен лайăхрах, тӳрĕ кăмăлпа ĕçленине асра тытса, **партире тăракан большевиксене кăна мар, тата партире тăман большевиксене те пысăкрах ĕçе уйăрса лартмалла.**

Парти организацийĕсен **юрăхсăр тата вăйсăр работниксене** улăштарасси çинчен, предприятине, чугунçула ертсе пыма тата производствăра йĕркелĕх туса хума пултарайман çемçешке работниксене улăштарасси çинчен **ыйтăва вăхăтра** лартмалла. **Сӳпĕлтисене, чĕрĕ ĕç тума пултарайман çынсене, вĕсем партире тăнине е партире тăманнине пăхмасăр, ĕçрен хăтармалла тата пĕчĕкрех ĕçе лартмалла.**

3. **Чугунçулпа шывçул транспорчĕн политотделĕсем территориальнăй парторганизацисенчен уйăрăлса тăнине пĕтермелле. Политотделсем парти обкомĕсене, горкомĕсене пăхăнса тăмалла.**

Парти обкомĕсемпе горкомĕсем политотделсен ĕçĕнчи канцелярилле метсдсене пĕтермелле тата вĕсенчен партин хастарлăн ĕçлекен оргăнĕсем, транспорт ĕçĕшĕн тăрăшакан тата транспорта хăпартас ĕçе активлăн пулăшакан оргăнсем туса хумалла.

4. **Предприятисемпе наркоматсенче производствăллă-хуçалăхлă активсен пĕлтерĕшне çĕклесе яни** кирлĕ.

Вырăнти работниксен, инженерсен, стахановецсен опычĕпе лайăхрах усă курас тата критикăпа самокритикăна сарса ярас шутпа, наркоматра, главкра, çул çинче, заводра, шахтăра активсене тăтăшах пухни кирлĕ. Активсене промышленноçăн тĕрлĕ отраслисенчи работниксене хутшăнтарса та, çавăн пекех тата промышленноçпа транспортăн уйрăм отраслисем тăрăх та пухмалла.

5. **Стахановла движенине пур майсемпе те аталантарма кирлĕ,** стахановецсен пуçарулăхне ĕç тухăçлăхне ӳстерес, производствăн чи кирлĕ ыйтăвĕсене татса парас, производствăн кая юлса пыракан участокĕсене мала кăларас çулпа ямалла.

6. Чылай предприятисенче парти, профсоюз, комсомол тата ытти общественнăй организацисем ĕç вăхăтĕнче пухусем, ларусем, канашлусем туса иртереççĕ, çапла тунипе вара предприятисен йĕркеллĕ ĕçне дезорганизацилесçĕ, — çакăн пек **тĕрĕс мар практикăна пĕтерни** кирлĕ.

Парти, совет, профсоюз, комсомол тата ытти общественнăй организацисене çаксене тума **пачах чарни** кирлĕ:

а) предприятисемпе учрежденисенче **ĕç вăхăтĕнче пухусем,** ларусем тата тĕрлĕ канашлусем **пухма;**

б) рабочисемпе служащисене **ĕç вăхăтĕнче чĕнсе илме;**

в) предприятисемпе учрежденисенче рабочисемпе служащисене **ĕçрен илсе** вĕсене тĕрлĕ кампанисем ирттерме е шеф тата ытти ĕçсемпе командировкăсене **яма;**

г) предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисене **ĕç вăхăтĕнче хăйсен тӳррĕм ĕçĕнчен татса,** общественнăй организацисем хӳшнă тăрăх ĕçе тĕрĕслекен комиссисенче тата бригадăсенче хутшăнса ĕçлеме.

Яланлăхах çакăн пек йĕрке туса хумалла: предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисен общественнăй организацисем хушакан ĕçсене ĕç вăхăтĕнче мар, ĕçе пĕтерне хыççăн çеç тумалла.

* * *

Пирĕн промышленность пĕтĕм халăх хуçалăхне аталантармалли никĕс пулнă, пулса тăрать те. Промышленность пĕтĕм халăх хуçалăхĕнче ертсе пыракан вырăн йышăнса тăнă, йышăнса тăрать те. Промышленность пирĕн пĕтĕм социализмлă хуçалăха, çав шутрах ялхуçалăхне те, транспорта та, малалла ертсе пырать. Промышленность çĕршывăн оборонăллă вăй-хăвачĕн никĕсĕ пулнă, пулса тăрать те. Кучухнехи пĕтĕм тĕнчери обстановкăра пирĕн промышленность умĕнче, унăн мĕнпур отраслисем умĕнче ответлăран та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вăл калама çук йĕркеллĕ, мĕн май пур таранах тухăçлă ĕçлемелле. Кучухнехи çĕнĕ техникăллă база çинче оборудовани тунă, мĕнпур йышши промышленнăй чĕртаварсен çăлкуçĕсене хăйĕн аллинче тытса тăракан пирĕн промышленность хальхинчен чылай лайăхрах ĕçлеме пултарать тата ĕçлемелле те, мĕнпур отраслĕсем тăрăх хальхинчен темиçе хут ытларах тата лайăхрах пахалăхлă продукци пама пултарать.

Хозяйственниксен тата парти ĕçĕнчи руководительсен çакăн пек ĕçлес пулать: 1941 çулта пĕр облаçра та, пĕр хулара та тата промышленноçлă пĕр центрта та кая юлса пыракан пĕр предприяти те ан пултăр. Пирĕн промышленноçра тата транспортра юлса пыракан предприятисем пулмалла мар. Мĕнпур заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, чугунçулсем плана тултарса пыма тивĕçлĕ.

Плана тултарассишĕн кĕрешни, план тăрăх ĕçлесси — вăл çакна пĕлтерет:

а) продукци туса хатĕрлес тĕлĕшпе çулталăкри, кварталти тата уйăхри плана, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе мар, планпа йышăннă тăрăх, хатĕр продукцисене туса кăлармалли малтанах хатĕрленĕ график тăрăх, пĕртан тултарса пымалла;

б) плана промышленность отраслисем тăрăх, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе çеç мар тултармалла, ăна кашни уйрăм предприяти тăрăх тултарса пымалла;

в) плана предприяти тăрăх, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе çеç мар, ăна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадăра, кашни станок çинче, кашни сменăра тултарса пымалла;

г) плана хисеп тĕлĕшĕнчен çеç мар, пахалăх, комплект тата ассортимент тĕлĕшĕнчен те обязательно тултарса пымалла, çирĕплетнĕ стандартсене тата таварăн хăйне ларакан хакĕ планĕпа мĕн чухлĕ тăмаллине те пăхăнса ĕçлемелле.

Пирĕн çĕршыв экономикăпа культура строительствинче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Анчах та çав çитĕнӳсемпе мăн кăмăлланса тата лăпланса ларма юрамасть. Çитĕнӳсемпе лăпланса ларни тата халиччен мĕн тунипе кăмăлсене тултарни — чи пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Çак вăл пирĕн ĕçе пĕтерсе лартма пултарнă пулĕччĕ. Пирĕн халĕ те пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене тӳссе пурăнни питех те хăрушă тата сиенлĕ япала.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ çакна шанса тăрать: пирĕн парти организацийĕсем тата промышленноçпа транспортри мĕнпур ертсе пыракан работниксем промышленноçпа транспорт ĕçĕнчи çитменлĕхсене халех пĕтерес тĕлĕшпе большевикла çине тăрса ĕçе тытăнĕç, çак енĕпе хăйсен ĕçне тĕпренех лайăхлатса ярĕç тата, XVIII конференци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пынă никĕс çинче, çак решенисем тавра рабочисен, служащисен, инженерсемпе техниксен мĕнпур массине мобилизацилесе, сывăх вăхăтрах ĕнтĕ социализмлă промышленноçпа транспортăн çĕнĕ татăклă çĕнтерĕвĕсене тăвĕç.

Харьковри предприятисенче

ХАРЬКОВ, февралĕн 18-мĕш. (ТАСС). Хулари заводсемпе фабрикăсенче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Маленков юлташ тунă доклада çавтери пысăк тимлĕхпе сӳтсе-яваççĕ. Предприяти руководителĕсем, инженерсем, техниксем, мастерсем, стахановецсем Маленков юлташ докладĕнче палăртнă мероприятисене хĕрӳллĕн ырлаççĕ.

— Талăкри графика пăхăнса ĕçлени,—тет малта пыракан «Серп и молот» машиностроительный завод директорĕ Полевский юлташ,--мĕн таран пысăк вырăн йышăнса тăнипе эпир хамăр опытра куртăмăр. Пирĕн завод коллективĕ графика çирĕп пăхăнса ĕçленипе пĕр уйăх çурă хушшинче икĕ уйăхри плана ирттерсе тултарчĕ. Çавăн пекех, единоначалине çирĕплетес, мастер рольне ӳстерес, техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене производствăра ĕçе кĕртес т. ыт. ыйтусене те питĕ тĕрĕс лартнă.

Шевченко ячĕпе тăракан текстильнăй машиностроени завод директорĕ Рубанов юлташ çапла каланă.

— Маленков юлташ предприясенче тасалăхпа йĕркелĕх пулмалли çинчен ыйтăва питĕ тĕрĕс лартрĕ, ку тĕлĕшпе те пирĕн тумалли ĕçсем чылай-ха.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Вăрман хатĕрлес, турттарса кăларас тата кирлĕ пункта турттарса пырас тĕлĕшпе обязательнăй йĕркепе панă плана Чăваш республикинчи районсем мĕнле тултарса пынине кăтартакан СВОДКА

(1941 çулти февралĕн 15-мĕшне, процентпа)

Районсем	Хатĕрленĕ	Кирлĕ пункта турттарса пынă	Турттарнă
Улатăр	32,3	32,0	32,1
Кувакино	17,0	26,5	19,3
Первомайский	17,0	55,0	8,1
Прачкав	36,9	20,5	8,3
Чкаловский	31,8	—	12,6
Комсомольский	22,8	—	17,8
Йĕпреç	17,0	20,3	12,3
Канаш	28,7	—	20,1
Шăхасан	31,8	—	28,5
Вăрмар	40,5	—	19,1
Тăвай	55,2	—	26,4
Вăрнар	15,8	11,7	6,0
Калининский	34,2	15,1	41,4
Красноармейский	52,6	32,2	25,7
Çĕмĕрле	33,7	31,3	12,4
Элĕк	40,6	12,3	8,5
Хĕрлĕ Чутай	30,1	18,6	9,5
Советский	30,7	19,5	37,6
Етĕрне	35,2	—	12,6
Сĕнтĕр	19,8	—	15,5
Сĕнтĕрвăрри	24,4	—	9,9
Шупашкар	38,3	—	20,0
Ишлей	43,0	—	12,4
Октябрьский	46,0	—	6,9
Шăмăршă	24,2	38,5	15,1
Елчĕк	62,5	—	18,8
Республикипе	28,6	28,4	17,1

Ĕçе вăраха яраççĕ

ЕТĔРНЕ. Çĕмĕрлери мехлеспунктăн Етĕрнери лесопункчĕ вăрман хатĕрлес тата турттарас плана уйăхран уйăха тултармасăр пырать. 1940—41 çулти хĕллехи уйăхсенче лесопунктăн 9614 кубометр вăрман хатĕрлемелле, 17790 кубометр турттармалла пулнă. Февралĕн пĕрремĕшне пĕтĕмпе те 1900 кубометр вăрман касса хатĕрленĕ, 2500 кубометр турттарнă. Колхозсем хăйсене панă плана тултарса пымаççĕ. Етĕрне районĕнчи 8 колхозăн 6524 кубометр вăрман хатĕрлемелле пулнă пулсан, 1900 кубометр çеç хатĕрленĕ, 13500 кубометр турттарас вырăнне 933 кубометр кăна турттарнă. Вăрман çывăхĕнчи «Красная звезда» колхозăн 1800 кубометр вăрман хатĕрлемелле, ĕçе халĕ те тытăнман. 1500 кубометр вырăнне пĕтĕмпе те 110 кубометр кăна турттарнă. Иваньковăри «Путь к социализму» колхоз та вăрман турттарас ĕçе тытăнман.

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем те вăрман хатĕрлессипе турттарас ĕçе ӳрĕксӳрĕк туса пыраççĕ. Ку районри «Ударник», «Аврора», «13 лет РККА», «Новый путь» колхозсем вăрман хатĕрлес ĕçе пуçăнман.

Вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçсем юлса пынин пĕртен пĕр сăлтавĕ—вăл лесопунктра ĕçлекенсем оперативлă ертсе пыманнинче. Лесопункт вăрманта ĕçлекенсем валли ĕçлеме кирлĕ условисене туса паман. Вăрман турттаракансем çул япăххи пирки лесопункт начальникĕ пулнă Рябкин юлташа сахал мар каланă, юсама сĕннĕ, анчах Рябкин: «Мана мĕн ĕç»—тенисĕр пуçне урăх нимĕн те туман. Рябкин лесопункта ертсе пыма пултарайманнине пула ăна ĕçрен кăларнă. Ун вырăнне Шалапаев юлташа лартнă, анчах ĕçре улшăнусем курăнмаççĕ-ха. Вăрман хатĕрлессипе турттарасси çаплах юлса пырать. Лесопунктри работниксем лайăх ĕçлекен колхозсен паха тĕслĕхĕсене ытти колхозсене сарса пымаççĕ. Пушнарти Мичурин ячĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлес плана тултарнă. Анчах Мичурин ячĕпе тăракан колхозăн ĕçĕсене ытти колхозсене сарман.

Н. ЦВЕТКОВ.

110 хуçалăха колхоза илнĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Тӳрĕ ĕçлекен единоличниксене колхоза кĕме пулăшас шутпа ялсенче халь массăллă ăнлантару ĕçне кулленех сарса пыраççĕ.

1941 çулти январь уйăхĕнчен пуçласа колхоза кĕрекенсен йышĕ 110 хуçалăха çитнĕ. Коллективизаци енĕпе халиччен кая юлса пынă кивĕ Ахпӳрт, Тăрăн тата Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕсем мала тухса пыма пуçларĕç. Кивĕ Ахпӳрт ялсоветĕнчи «РОКК» колхоза кăна çак хушăра 20 хуçалăх кĕнĕ. Çавăн пекех Роза Люксембург, Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче те вуншар хуçалăха колхоза илнĕ. Çав хушăрах хăшпĕр ялсенче коллективизаци проценчĕ пачах ӳсмест. Çакă вăл уйрăмăнах Енших ялсоветĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхозра тата «1-ое Мая», «Звезда», «Ударник», «Кзыл Юлдуз» колхозсенче палăрать.

Хăшпĕр ялсенче колхоза кĕрекен единоличник хуçалăхĕсем хăйсен лашисене колхоза пĕрлештерес вырăнне аяккалла сутнисем пулкаланă. Акă, Исаев Леонид колхоза кĕме заявлени паричченех икĕ кун маларах хăйĕн лашине сутса янă. Паллах, çакăн пек единоличниксем колхоз хуçалăхне малалла тĕреклетсе пыма мар, хăйсен интересĕсемшĕн кăна колхоза кĕреççĕ. Çакăн пек хуçалăхсем хушшинче ăнлантару ĕçне тимлĕн туса пымалла.

Ф. Архипов.

* * *

ЭЛĔК. Изванка ялĕнче 6 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

С. РОДИКОВ.

1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче Шупашкарти 2-мĕш №-лĕ суйлав участокĕнче. **Ӳкерчĕк çинче:** ачасен пӳлĕмĕнче.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Албани фронтĕнче уйрăмах авиаци вăйлăн ĕçленĕ. Югославири «Време» хаçат кăтартса панă тăрăх, итальянецсем Превез çине пырса бомбăсем пăрахнă. Греци авиацийĕ фронт районĕнчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсенчен персе тăнă. Англин Грецири сывлăш-çар вăйĕсен командованин пĕлтерĕвĕнче февралĕн 16-мĕшĕнче Англи бомбардировщикĕсем итальянецсен Клисура—Берат çулĕ çинче чакса пыракан войскисен колоннисем тата автомобиль транспорчĕ çине час-часах пыра-пыра бомбăсем пăрахнă, тесе кăтартса панă. Итали çарĕн верховнăй командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн кăнтăр участокĕнче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Итальянецсем пĕр кун хушшинче икĕ хутчен пысăк контрнаступлени тунă, пĕрне—центральнăй фронтра, Клисурăран çурçĕреннерех, теприне—çурçĕрти фронтра. Греци войскисем, тесе çырать. Югославири «Време» хаçатăн корреспонденчĕ, итальянецсен атакисене сирсе пăрахса хăйсем енчен фронтăн центральнăй участокĕнче икĕ хут атакăна кĕнĕ. «Политика» хаçатăн Афинăри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, вăл çапăçусенче Греци войскисем укреплениллĕ позицисене чылай йышăннă. Грексем итальянецсен чылай салтакĕсене тата çар материалĕсене тыткăна нумай илнĕ. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци войскисем Тепелене—Клисура сектора Требешине сăртран пуçласа пĕтĕмпех хăйсен аллинче тытаççĕ, унта вĕсем Берат тата Валона патне пырса кĕнине асăрхаса тăраççĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра виçĕ фронтра та (Эритрейăра, Абиссинире тата Итали Сомалийĕнче) вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. Итали сводки пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Джуба (Итали Сомалийĕ) юханшывăн анат вĕçĕнчи атакине сирсе пăрахнă. Англин сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованин сводкинче итальянецсен чаçĕсене Джуба юханшывĕн тепĕр енне хăваласа янă, тесе палăртнă.

Абиссинире Англи войскисем каллех Гондар патнелле куçса пыма тытăннă. Çавăн пекех, Рудольф кӳлли районĕнче те Англи войскисем Абиссини территори çине шалалла кĕрсе пыраççĕ. Англи авиацийĕ Маи-Адаге тата Чинели (Абиссиния) çине бомбăсем пăрахать.

Керен (Эритрея) районĕнче Англи истребителĕсен авиацийĕ çĕр çинчи войскăсене пулăшса пырать.

Çурçĕр Африкăра Германи авиацийĕ ĕçленине палăртаççĕ. Итали сводкинче: Германи авиаци корпусĕн эскадрильи Англи войскисен тылне тата Киренаикăри бази çине пырса бомбăсем пăрахнă, тенĕ. Англи тинĕс авиацийĕ, тенĕ Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере, Тунис çыранĕсем тăрăх разведкăра пулнă.

Германи авиацийĕ Мальта утравĕ çине çав-çавах пырса тапăнать. Англи бомбардировщикĕсем, тенĕ Англи сводкинче, Германин Италине куçарнă авиаци корпусĕн бази çине—Сицили утравĕ çине пырса тапăннă. Бомбăсене Катаниri ангарсем тата административлă çуртсем çине пăрахнă. Комизора çĕрте ларакан самолетсем çине бомбăсем пăрахнă.

Англи фронтĕнче Германи авиацийĕн активлăхĕ ӳснине палăртаççĕ. Германи командованийĕн сводкинче çапла каланă: февралĕн 17-мĕшĕнче тата февралĕн 18-мĕш ыран тенĕ чухне Германи бомбардировщикĕсем Англин вăрçă тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăракан объекчĕсене атакăланă. Самолетсем Лондон çине, Англин Кăнтăр тата Хĕвеланăçĕнчи çыранĕсенчи порт сооруженисемпе прожекторсен установкисем çине, çавăн пекех Çурçĕр Шотландири нефтехранилище çине вут тивретсе яракан тата фугаслă бомбăсем пăрахнă.

Февралĕн 18-мĕш. (ТАСС).

Болгарипе Турци декларацийĕ

АНКАРА, февралĕн 17-мĕш. (ТАСС). Анатолири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сараджоглу тата Болгарин Анкарари посланникĕ Киров Болгарипе Турци декларацийĕ çине алă пуснă.

Декларацине çакăн пек статьясем кĕртнĕ:

«Статья I. Турция тата Болгария, вĕсен тулашри политикин çирĕп никĕсĕ кирек мĕнле агрессирен те тытăнса тăрасси пулса тăрать, тесе шутлаççĕ.

Статья II. Икĕ правительстви те пĕрпĕрин çине çавтери туслăн пăхнипе хавхаланса хăйсен ырă кӳршĕллĕ отношенийĕсене сыхласа хăварма тата пĕр-пĕрне шанса тăрассине вăйлатса пыма килĕшрĕç.

Статья III. Икĕ правительстви те çапла пĕлтереççĕ: вĕсем хăйсен экономикăллă структурине килĕшӳллĕ икĕ çĕршыв хушшинче суту-илӳ тăвас ĕçе сарса пыма кирлĕ майсене пĕтĕмпех шыраса тупма хатĕр.

Статья IV. Икĕ правительстви те çак декларацире тепĕр хут çĕнĕрен паллă тунă туслăхпа тата пĕр-пĕрне шанассипе икĕ çĕршыв хаçачĕсем те хавхаланасса кĕтеççĕ».

Румынире политикăллă ĕçсем тума чарнă

Румынири «Мониторул офичиал» хаçат король февралĕн 14-мĕшĕнче кăларнă декрета пичетлет. Вăл декретра каланă тăрăх, «çĕнĕ регламент паричченех» Румынире политикăллă ĕçсем тума чарнă.

* * *

Румынири хаçатсем январĕн 21—23-мĕшсенче легионерсем восстани тунă пирки нумай çĕрте ухтарусемпе арестсем туса ирттернин результачĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Официальнăй йĕркепех пĕлтернĕ тăрăх, халиччен пурĕ 7.829 легионера арестленĕ. Çар судĕ 22 легионера 5 çултан пуçласа 25 çула çити каторгăра ĕçлеттермелле тунă тата 28 легионера 5 çула çити тĕрмере хупса усрамалла тунă. Çар судĕ çавăн пекех тата легионерсен тепĕр группине суд тунă, çак легионерсене вĕсем январĕн 22-мĕшĕнче Жилавски вăрманта çынсене вĕлернĕшĕн айăпланă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, вĕсем Бухарестри 92 деятеле персе вĕлернĕ. (ТАСС).

Румынири легионерсене—пăлхавçăсене суд тунă

БУХАРЕСТ, февралĕн 18-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, восстанине хатĕрленнĕ тата унта хутшăннă тесе Бухарестра арестленисем хушшинче Румынин Берлинри посланникĕ пулнă Раду Гречеану та пур.

Февралĕн 16-мĕшне çитиччен Бухарестра пурĕ 3.822 çынна арестленĕ. Провинцисенче ку тариччен 4.509 çынна арестленĕ. Бухарестри военно-полевой суд февралĕн 16-мĕшĕнче пĕр легионера 6 çуллăха каторгăна ямалла, 8 легионера 4 уйăхран пуçласа 6 çул таран тĕрмене хупса лартмалла тунă.

Пулас мастерсем патĕнче

Куславккари ФЗО шкулĕ вĕренӳ çулĕ пуçлансанах Çĕмĕрлери ФЗО шкулĕпе социализмлă ăмăртăва тухнă. Вĕсем ăмăртăва тухса илнĕ тĕп обязательство социализмлă промышленность валли производство ĕçне пур енĕпе те тĕплĕн вĕренсе çитнĕ квалификациллĕ рабочисем хатĕрлесси пулса тăрать.

Куславккари ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, производство ĕçне хăвăрт хăнăхса пыраççĕ. Ку тĕлĕшпе рамщиксен группинче вĕренекенсем уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вăл группăра вĕренекенсем П. Александров, Хусяханов производство ĕçне вĕреннĕ çĕрте рабочисен нормисене тултарса ĕçлеççĕ. Çитес вăхăтра вĕренекенсенчен чылайĕшĕ станоксем патĕнче хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăнаççĕ.

Хĕрлĕ ялавлă шкулăн опычĕсемпе паллашма

ИШЛЕЙ. Çак кунсенче Сĕнтĕрти вăтам шкулти комсомолецсемпе пионерсем Шетмĕпуçĕнчи Хĕрлĕ ялавлă шкула йĕлтĕрпе килсе кайрĕç. Вĕсем çак шкулти комсомол тата пионер организацисен ĕçĕсемпе уйрăмах тĕплĕн паллашса опытсем илчĕç.

С. Горланов.

Большевикла ҫураки умӗн

Торфпа усӑ кураҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Районра чылай колхозсем торф турттармалли плана пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ. План тӑрӑх 40.000 тонна турттармалла пулнӑ пулсан, 12.000 тонна турттарнӑ. Анаткас Марка, Ишлей, Шурча тата Ишлей ялсовечӗсенчи колхозсем торф турттарса кӑларас планне пӗтӗмпех тултарнӑ. Анаткас Марка ялсоветӗнчи «Правда» колхоз 1.500 тонна торфа тислӗкпе хутшӑнтарса уя купаланӑ. Нумай колхозсем торфа тислӗкпе, фекалипе хутшӑнтарса, торф компосчӗ тӑваҫҫӗ. «Авангард» колхозра, торфа фекалипе хутшӑнтарса, торф компосчӗ туса пахчана тӑкма шутлаҫҫӗ.

Уйрӑм колхозсенче ҫӗре торфпа ҫемҫетсе опытсем туса ирттерме участоксем уйӑраҫҫӗ. Торф ҫук колхозсене торф пур колхозсем ҫумне ҫирӗплетнӗ. Хӑшпӗр колхозсенче, торф ҫук ҫӗрте, юшкӑн турттараҫҫӗ. Свердлов ячӗпе тӑракан колхозра 900 лав юшкӑн уя турттарса кӑларнӑ.

В. Анисимов.

Райҫӗрӗҫ пайӗн мелиораторӗ.

Иккӗмӗш бригада ҫуракине хатӗр

КАЛИНИНО. Кӳлхӗрринчи «Трактор» колхозри иккӗмӗш бригада ВКП(б) XVIII конференцине ҫуракине тухма хатӗрленсе ҫитнипе кӗтсе илчӗ.

Бригадир Гр. Югин, Кӳлхӗрри ялсовет исполкомӗн депутачӗ, вӑл хӑйӗн ӗҫӗнче яланах ответлӑ пулса, пур ӗҫре те лайӑх примерсем кӑтартса пырать. Хӑйӗн бригадине мала кӑларассишӗн кӗрешет.

Агротехникӑна пурнӑҫлас майпа 20 гектар ҫине юр тытса хӑварнӑ, 850 лав юшкӑн, 200 лав торф кӑларнӑ, 21 центнер кӗл пухнӑ, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ 15 центнер, фекали 18 тонна хатӗрленӗ. Минеральный удобрени 7 тонна кӳрсе килнӗ. Ялхуҫалӑх машинисене пурне те юсаса ҫитернӗ, вӗсене сарайне кӗртсе лартнӑ. Ҫӗнӗрен ултӑ урапа илнӗ.

Колхозсем лашасене ҫуракине самӑр та мӑнтӑр кӑларассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Лаша кӳлмелли таврашсем пурте ҫителӗкӗ тата юсавлӑ. Вӑрлӑхсем кондицине ларнӑ. Уя вӑрлӑх илсе тухма михсем хатӗрленӗ.

Иккӗмӗш бригадӑпа пӗррӗмӗш бригада ӑмӑртса ӗҫлессӗ пулсан та, пӗррӗмӗш бригада ҫуракине хатӗрленессипе тата ытти ӗссенче те юлса пыни курӑнать. Кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, фекали хатӗрлесси тата торф кӑларасси ҫителӗксӗр пырать. Пӗррӗмӗш бригадӑн бригадирӗ Л. Судов ӗҫсене начар йӗркелет. Колхозниксем хушшинче ӑнлантарулла ӗҫсем ҫирӗп вырӑнта мар.

К. Григорьев.

Сахалтарах калаҫмалла, нумайтарах ӗҫлемелле

КУКЕҪ. Машинно-тракторнӑй станцинчи пӗррӗмӗш бригада ялхуҫалӑх машинисене юсас тӗлӗшпе малта пырать. Вӑл 4 трактор, 8 сӳре, 4 плуг, пӗр сеялка юсаса пӗтерчӗ. Бригадир Кузьмин юлташ бригадӑри трактористсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх туса пырать. Кунта кашни кунах калаҫусем е докладсем туса ирттереҫҫӗ.

Тӑваттӑмӗш бригадӑра та ӗҫсем лайӑх пыраҫҫӗ. Агитатор В. Егоров юлташ хаҫат-журналсем вуласа парать. Бригада 3 трактор, 4 плуг, 8 сӳре, пӗр сеялка юсаса лартрӗ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, МТС-ра тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсасси питӗ сӳрӗккӗн пырать. График тӑрӑх, ку тарринччен 31 трактор, 35 плуг, 12 сеялка, 2 культиватор, 92 сӳре, 2 молотилка, 9 комбайн юсаса пӗтермелле пулнӑ. Халӗ пӗтӗтмпе те 18 трактор, 20 плуг, 6 сеялка, 10 культиватор кӑна юсанӑ.

Мӗншӗн кая юлса пырать машинӑсене юсасси? Кунта ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтарса тухман, чылай бригадӑсенче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе туса пымаҫҫӗ, тухӑҫлӑн ӗҫлеме рабочисем валли условисем туса паман. Тракторсене юсамалли мастерскойра вентиляци ҫук пирки рабочисене час-часах сӗрӗм тивет. Хӑшпӗр чух тата ҫакӑ та пулать: трактор пайӗсене юсама Канаша лӗҫнӗ чухне тракторӑн пӗр пайне пӗр кун, тепӗр пайне иккӗмӗш кун илсе каяҫҫӗ. Ҫапла вара пӗр ӗҫшӗнех икӗ хут Канаш хулине ҫӳреҫҫӗ, укҫа-тенкӗ нумай тӑккалаҫҫӗ.

Хӑшпӗр бригадӑсем тракторсене тата ытти машинӑсене юсама пачах тытӑнман. 10-мӗш номерлӗ бригадӑн (бригадирӗ Васильев юлташ) 4 трактор, 4 плуг, 8 сӳре, пӗр сеялка юсамалла пулнӑ пулсан, халӗ пӗр машинӑна та юсаман, 9-мӗш номерлӗ бригадӑра та ӗҫсем ҫавӑн пекех.

Тракторсемпе машинӑсене лартнӑ вырӑнта темӗн чухлех тимӗр-тӑмӑр сапаланса выртать, кунта таса мар. Плугсем пурте юр айӗнче.

— Плугсем мӗншӗн кунта лараҫҫӗ? — ыйтрӑмӑр эпир.

— Ара вӗсем ҫураки ҫитсен хӑйсемех тухаҫҫӗ вӗт, — терӗ МТС директорӗн заместителӗ Пудовкин юлташ. Тракторсене лартнӑ вырӑнта та юр кӗрсе тулнӑ.

МТ Станцинче тракторсене юсасси ҫинчен, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетесси ҫинчен пухусенче те, канашлусенче те час-часах сӳтсе яваҫҫӗ. Анчах калаҫни калаҫнипех пӗтет, ӗҫсем лайӑхланмаҫҫӗ, ӗҫ тухӑҫӗ ӳсмест.

П. Никитин.
С. Гаврилов.

Хӗрӳллӗ ӗҫ пырать

Иван Алексеев, «Заветы Ильича» колхозӑн иккӗмӗш бригадӑри колхозник, алла кӗреҫе илсе уя тухса кайрӗ. «Кайса пӑхас, ӑҫта юр ҫӳхерех пек, унта, тен, тепӗр хут юр тытса хӑвармалла пулать».

Кӗртыррисем юрпа аван витӗннӗ, вӗсем ҫинче хулӑм кӗрт выртать. Ҫапах вӑл сахал-ха. Мӗн чухлӗ юр ытларах, ҫавӑн чухлӗ ҫӗрте нӳрӗ ытларах тытӑнса юлать, тырпул тухӑҫлӑрах пулать.

...Алексеев уйхиртен таврӑнчӗ. Колхозниксене пухса ӑҫта юр тытма кайма кирли ҫинчен каласа пачӗ. Вӗсемпе пӗрле хӑй те каллех уя тухса утрӗ.

Колхозниксем юр тытаҫҫӗ. «Ытларах юр тытӑнса юлмалла пултӑр, лайӑхрах, шахмат евӗрлӗ купалӑр. Тӑрӑшни хамӑршӑнах». Иван Алексеев кашни колхозникӑн ӗҫне тӗрӗслесе пырать, мӗнле ӗҫлеме кирлине кӑтартса парать.

Алӑра—ӗҫ, пуҫра—тарӑн шухӑшсем. Колхозниксемпе пӗрле пухӑнса ларсан час-часах Иван Алексеев вӑйлӑ тырпул туса илес тесен мӗнле ӗҫлеме кирли ҫинчен калаҫу пуҫлать. Вӑл малтан ку тариччен мӗн-мӗн тунине пӑхса тухать, унтан паян-ыран тумалли ӗҫсем ҫине куҫать.

— Пирӗн кӗл татах та ытларах пухмалла пулать. Шухӑшласа пӑхӑр-ха, мӗнле тусан эпир ӑна нумайтарах пухма пултарӑпӑр.

Калаҫу хӗрсе пырать. Пӗри—пӗр сӗнӳ, иккӗмӗшӗ—тепӗр сӗнӳ параҫҫӗ. Ушкӑнпе, юлашкинчен, пӗр шухӑш патне килсе тухаҫҫӗ:

— Пӗр чӗпчӗм кӗле те ахаль сая ямалла мар. Кӗле килсенчен пухса, ӑна типтерлӗ, пӗр вырӑнта пӑхса усрамалла.

Колхозра хӗллехи вӑхӑтра тумалли ӗҫсем нумай. Агротехникӑллӑ мероприятисене пурнӑҫламалла: тислӗк пухмалла, минеральнӑй удобренисене кӳрсе килмелле, фекали турттармалла, сахал-и вара ӗҫ колхозра?

«Заветы Ильича» колхоза Элӗк енчен пырса кӗнӗ ҫӗрте, сылтӑмра, тислӗк куписем пур. Пысӑк купасем. Тислӗк ҫӗрет.

Колхозниксем каҫ пулсан колхоз клубне пухӑнаҫҫӗ. Кунта плакатсем, картинӑсем пур. Колхозри агрокружокӑн занятийӗ пырать. Ф. Васильев, колхозри 1-мӗш бригадӑн бригадирӗ, колхозниксем хушшинче удобренисем ҫинчен калаҫу ирттерет. Программа анлӑ. Ҫуракине тухиччен колхозниксене тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартмалли майсем ҫинчен тӗплӗн ӑнлантармалла, агротехникӑллӑ пӗлӳ памалла. Агротехникӑна вӗрентме, колхозри бригадирсемсӗр пуҫне, Хирлепуҫӗнчи шкулта вӗрентекен учительсене явӑҫтарнӑ.

Колхозниксен агротехникӑна вӗренес туртӑмӗ пысӑк. Вӗсем вӑйлӑ тырпул туса илме вӗренесшӗн, стахановецсен паха опычӗсемпе паллашасшӑн. Занятисем пынӑ вӑхӑтра чылай ыйтусем сиксе тухаҫҫӗ.

—Пирӗн патӑрта мӗнле сортлӑ вӑрлӑхран: тулӑран, пӑрҫаран, урпаран вӑйлӑ тупӑш илме пулать?

— Пӗр гектар ҫине мӗн чухлӗ кӗл, фосфорит сапма юрать?

— Вӑрлӑха акас умӗн миҫе кун малтан яровизацилесе хумалла?

Мӗн чухлӗ вӗренетӗн, ҫавӑн чухлӗ ӗҫлес килет. Малтанхи кун колхозра агрокружок занятийӗ пулса иртнӗ пулсан, тепӗр кунне, кӗтсех тӑр, киле пӗр ҫын юлмиччен юр тытма, кӗл пухма, фекали турттарма тухса каяҫҫӗ.

Колхозниксем кӑҫал, кирек мӗнле ҫанталӑк пулсан та, гектартан 30 центнер тӗштырӑ туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. Вӑл ӗмӗтре пур. Иртнӗ ҫулта гектартан 18 центнер ытларах тӗштырӑ туса илнӗ пулсан, кӑҫал, паллах, хӑйсен умне лартнӑ задачӑна пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ. Уншӑн тӑрӑшаҫҫӗ халӗ. Ана пурнӑҫа кӗртме шанчӑк та пур. Иртнӗ ҫулта ҫуртри акмалли вырӑна ҫӗртме туса хӑварнӑ. Халӗ юр тытаҫҫӗ, тӑппара нӳрӗ ытларах юлать. Тислӗк нумай пухаҫҫӗ.

Колхозри тимӗрҫ иртен пуҫласа каҫчен тимӗр туптать, хӗрсе ялхуҫалӑх инвентарӗсене юсать. Тимӗрҫ «Заветы Ильича» колхозӑн ялхуҫалӑх инвентарӗсене юсаса пӗтернӗ, халӗ вӑл ҫывӑхри колхозсене пулӑшма, вӗсен ялхуҫалӑх машинисене юсама тытӑннӑ.

Нумай пулмасть «Заветы Ильича» колхоза Хӗрлӗ Чутай районӗнчен Элӗк районне социализмлӑ ӑмӑрту договорне тӗрӗслеме килнӗ делегаци кӗрсе тухнӑ. Делегаци ку колхоз ҫуракине мӗнле хатӗрленсе пынипе хытӑ интересленнӗ. Колхозри хӑшпӗр кӑлтӑксене кӑтартса хӑварнӑ.

— Ҫук, кӑҫал маххӑ памастпӑр. Иртнӗ ҫул районри ытти колхозсенчен вӑйлӑ тырпул туса илтӗмӗр пулсан, кӑҫал тем более... Ӗҫлени вӑл харама каякан мар,—тенӗ вӗсем килнӗ делегацине.

Чӑнахах вӑл ҫапла пулма пултарать те. Акӑ паян колхозниксем каллех Вӑрнара фосфорит тиеме тухса кайрӗҫ. Элӗкрен фекали лавӗсем тухрӗҫ. Килӗрен кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса ҫӳреҫҫӗ. Уйра юр тытаҫҫӗ.

Ив. МОСЕЕВ.

Элӗк.

Тырпул тухӑҫне мӗнле ӳстерме пулать

Халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ колхозлӑ хресченсем умне ҫулсерен 7—8 миллиард пӑт тӗштырӑ туса илес задача лартрӗ. Пысӑк та ответлӑ задача. Тӑрӑшса ӗҫлесен ҫеҫ ҫавӑн чухлӗ тырпул туса илме пулать. Ҫӗр мӗн пама пултарнине пӗтӗмпех илме тӑрӑшмалла.

Вунпӗрмӗш ҫул бригадирта ӗҫлетӗп. Ҫак хушӑра паха опыт пухрӑм. Ҫавсем ҫинчен кӗскен калас тетӗп. Ҫӗре пур майсемпе те ҫемҫетме пулать. Ашӑх сухаласа акатӑн — тырӑ сахал туса илетӗн, тарӑн сухаласа акатӑн — тырӑ тухӑҫӗ пысӑк пулать. Эпир 20—22 сантиметр тарӑнӗш сухаласа, сеялкӑсемпе акатпӑр. Тырӑсем тикӗс шӑтса тухса патвар ӳсеҫҫӗ. Тӗрлӗ удобренисене кирлӗ чухлӗ хывни те, калчасене тислӗк шывӗпе шӑварни те тырпул тухӑҫне ӳстерме нумай пулӑшать. Агротехникӑллӑ пур ӗҫсене те пурнӑҫа кӗртсе пынине пула эпӗ ертсе пыракан бригадӑн тырпул тухӑҫӗ ҫулран ҫулах ӳссе пычӗ. 1937 ҫулта 75 гектар ҫинчен 22-шер центнер тӗштырӑ туса илтӗмӗр. 1938 ҫулта кашни гектартан 17 центнер, 1939 ҫулта — 19 центнер, 1940 ҫлута 83 гектар ҫинчен кашни гектар пуҫне 18 центнер ытла тӗштырӑ пухса илтӗмӗр.

Тырӑна хӑш вӑхӑтра акмаллине пӗлес пулать. Тӑпра типессе кӗтме юрамасть. Ака ӗҫӗсем тата уборка вӑхӑтӗнче пирӗн колхозниксем алла усса лармаҫҫӗ. Вӑй-хал хурса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ кирлӗ чухлӗ тырпул туса илетпӗр.

Ӗҫлесе пухнӑ опытран эпӗ ҫакӑн пек вывод тӑватӑп: пӗлсе ӗҫлесен хут те мӗнле ҫӗр ҫинче те 100 пӑтран кая мар тырпул туса илме пулать.

Пирӗн колхоз кӑҫал кашни гектартан 25-шер центнер тӗштырӑ туса илме пулчӗ. Эпир ӑна пурнӑҫлатпӑр.

НИКОЛАЕВ.

«Ӗмӗт» колхозри 3-мӗш бригада бригадирӗ, Ҫӗрпӳ р.

Выставка кандидачӗсене вӑхӑтра палӑртса ҫитерер

1941 ҫулти Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗсем пулма тӑратнӑ кандидатсем ҫинчен документсем йӗркелесе ҫитермелли срок нумай юлмарӗ. Анчах документсем тӑратасси питӗ япӑх пырать. Февралӗн 10-мӗшне районсенчен 650 кандидат пирки кӑна документсем тӑратнӑ. Улатӑр, Вӑрнар, Йӗпреҫ районӗсем 54 кандидатран пуҫласа 91 кандидата ҫити тӑратнӑ. Советский, Сӗнтӗр, Красноармейский районӗсем 12-шер кандидат, Элӗк, Куславкка районӗсем саккӑршар, Первомайский район 4 кандидат пирки тӑратнӑ. Вӑрмарпа Октябрьский районӗсем пӗр кандидат та тӑратман.

1940 ҫулта пирӗн республикӑри колхозсем тата машинно-тракторнӑй станцисем, унччеи икӗ ҫулпа танлаштарсан, лайӑхрах ӗҫлерӗҫ, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул пуҫтарса илчӗҫ. Ҫавӑнпа 1941 ҫулта уҫӑлакан Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗсем йышлӑн пулмалла. 1940 ҫулта участник пулнисем тата 1940 ҫулта ялхуҫалӑхӗнче палӑрнӑ стахановецсен те выставкӑна хутшӑнмалла.

Ҫакна шута илмелле, 1941 ҫулта уйрӑм звеносем тата вӗсен мӗнпур членӗсем хӑйсен ҫитӗнӗвӗсем тӑрӑх выставкӑна хутшӑнма пултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех колхозсенче подсобнӑй предприятисем, плотинӑсем, кӳлӗсемпе пӗвесем тунӑ ҫӗрте тата ҫулйӗр строительствипе вӑрман хуҫалӑхӗнче малта пыракансене выставкӑна хутшӑнма ирӗк панӑ.

Шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, кӑҫал выставка участникӗсен хисепӗ, малтанхи ҫулсемпе танлаштарсан, ик-виҫ хут ытларах пулмалла. Пирӗн республикӑра 1939 ҫулта 618 участник, 1940 ҫулта 816 участник пулнӑ пулсан, 1941 ҫулта вара выставка участникӗсем 1500 кая мар пулмалла. Ҫакӑн тӑрӑх илсе пӑхсан выставка участникӗсем пулма кандидатсем тӑратасси районсенче питех те начар пырать.

Наркомпрос чи лайӑх вулав ҫурчӗсене, библиотекӑсене, клубсене тата вӗсен руководителӗсене выставкӑна хутшӑнма кандидата тӑратас тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. Паянхи куна ҫитсе пӗр кандидат та тӑратман. Ку тӗлӗшпе ҫулйӗр управленийӗнче те ӗҫсем чаплӑ теме ҫук.

Ҫамрӑк натуралистсене кандидата тӑратасси пӗлтӗрхинчен лайӑхрах пырать. Иртнӗ ҫулта 20 кандидат пулсан, кӑҫал вара 42 кандидат тӑратнӑ.

Кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе начар ӗҫлени вӑл райсоветсен исполкомӗсем тата райҫӗрӗҫ пайӗсем ҫак ӗҫе хакламаннинчен, ӑна кулленхи ӗҫпе ҫыхӑнтарса пыма пӗлменнинчен килет. Чӑваш АССР Совнаркомӗ райсоветсен исполкомӗсен председателӗсене тата райҫӗрӗҫ пай заведующийӗсене кандидатсене йышлӑн палӑртма, вӗсем тӑрӑх документсене хӑвӑртрах Совнаркома тӑратма хушрӗ. Кандидатсем палӑртас ӗҫе колхозсенче, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен канашлӑвӗнче тата ял Советсен сессийӗсенче сӳтсе явмалла.

Кандидатсене палӑртас тата вӗсем ҫинчен документсем йӗркелес ӗҫе тӗпренех лайӑхлатмалла, юлашки юлнӑ вӑхӑтпа туллин усӑ курмалла.

Н. НИКИТИН.

Колхоза кӗреҫҫӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хирти Мӑрат ялсоветӗнче 9 хуҫалӑх колхоза кӗнӗ.

Е. ДЕРЖАВИН.

ЙЕПРЕҪ. Районри колхозсенче XVIII партконференци тӗлне 179 хуҫалӑх колхоза кӗчӗҫ. Вӑл шутран Хурамалта 45 хуҫалӑх, Чӑрӑшкассинче 15 хуҫалӑх тата Шӑртан ялӗнче 15 хуҫалӑх кӗнӗ.

А. КУЖИКОВ

Ҫӗнӗ кӗнекесем

И. СТАЛИН. — «Хӗрлӗ Ҫарӑн виҫӗ уйрӑмлӑхӗ ҫинчен».

Ҫак пысӑк мар кӗнекене Чӑвашгосиздат 1938 ҫултах чӑвашла куҫарса кӑларнӑ. Анчах вӑл халӗ те ҫӗнӗ кӗнекех тата нихӑҫан та кивелмӗ.

Ку кӗнеке И. В. Сталин юлташ Мускав Совечӗн Хӗрлӗ Ҫар вунӑ ҫул тултарнӑ ячӗпе пухӑннӑ чаплӑ пленумӗнче каланӑ сӑмах пулса тӑрать. Хӑйӗн сӑмахӗнче Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫарӑн виҫӗ уйрӑмлӑхӗ ҫинчен кӑтартса панӑ.

Хӗрлӗ Ҫар — ирӗке тухнӑ рабочисемпе хресченсен ҫарӗ;

Пирӗн ҫар — хамӑрӑн ҫӗршыври халӑхсем хушшинчи тӑванлӑх ҫарӗ;

Хӗрлӗ Ҫар — интернационализмлӑ ҫар.

Ҫакӑнта пирӗн Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑвачӗпе тӗрекӗ.

* * *

Совет Союзӗн Геройӗ И. МОШЛЯК. «Хасан кӳлли патӗнче». Чӑвашгосиздат. 1940 ҫ. 47 стр. Хакӗ 1т. 25 пус.

Ҫак кӗнекене Совет Союзӗн Геройӗ И. Мошляк юлташ ачасем валли ҫырнӑ. Анчах ӑна ҫитӗннӗ ҫын та хӗпӗртесе тата хумханса вуласа тухать.

Автор ку кӗнекере Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем Хасан кӳлли патӗнче Япони самурайӗсене ҫӗмӗрсе тӑкни ҫинчен калать. Кӗнеке авторӗ хӑй Хасан кӳлли патӗнчи ҫапӑҫусенче пулнӑ. Вӑл Заозерная сопка ҫине никамран малтан улӑхса, унта Хӗрлӗ ялав хӑпартса лартнӑ. Кун ҫинчен вӑл ҫапла каласа парать:

«Юлашкинчен, эпир сопка тӑррине ҫитсе тухрӑмӑр. Штыксемпе тата гранатӑсемпе ҫапӑҫса кӗске вӑхӑт хушшинчех японецсене каялла сопка айккинелле хӑваласа ятӑмӑр.

— Ялав парӑр! — тесе кӑшкӑртӑм эпӗ.

Таҫтан вӗҫне шӗвӗртнӗ аврӑлӑ ялав тупса тыттарчӗҫ.

Эпӗ ялава ярса илтӗм те кӑшкӑртӑм:

— Сывӑ пултӑр Сталин юлташ! «Ура»! — терӗм.

— Урра! — тесе кӑшкӑрса ячӗҫ боецсем. — Аслӑ Сталина «урра»!

Эпӗ сулӑмлӑн сулса ялав аврине ҫӗр ҫине тӑрӑнтарса лартрӑм. Заозерная сопка ҫинче, ҫӗнтерсе илнӗ хамӑрӑн совет ҫӗрӗ ҫинче, тӑван ҫӗршывӑн йӑмӑх-хӗрлӗ ялавӗ вӗлкӗшме пуҫларӗ».

Кӗнекере Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсемпе командирӗсен паттӑрлӑхне кӑтартса панӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ февралӗн 23-мӗшӗнче 23 ҫул тултарать. Ҫак чаплӑ уява хатӗрленнӗ май, эпир ҫакӑнта асӑннӑ кӗнекесене кашниех вуласа тухма тивӗҫлӗ.

1-мӗш номерлӗ цех ӗҫлеме пуҫлани 10 ҫул тултарчӗ

Ҫак кунсенче Ҫӗмӗрлери древкомбинатри 1-мӗш номерлӗ цех коллективӗ хӑйсен цехӗ ӗҫлеме пуҫланӑранпа 10 ҫул тултарнине паллӑ турӗ.

Цех иртнӗ ҫулсем хушшинче ҫӗнӗ техникӑпа пуянланса, продукци туса кӑларассине ҫулсерен ӳстерсе пычӗ. Плана йӗркеллӗн пурнӑҫлать. 1939 ҫулти плана 175 процент, иртнӗ ҫулхи плана 104 процент тултарнӑ.

Цехра ҫӗнӗ ҫынсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Вунӑ ҫул каялла рядовой рабочи пулса ӗҫленӗ ҫынсенчен хальхи вӑхӑтра паллӑ специалистсем пулса тата ертсе пырас ҫӗрте ӗҫлекенсем сахал мар. Акӑ, мастер пулнӑ А. Миронов юлташ халӗ цехри технорук, Прокопьев юлташ — цех начальникӗ. Малтанхи вӑхӑтра рабочи пулнӑ Зюлаевӑпа Новиков юлташсем халӗ мастерсем пулса ӗҫлеҫҫӗ.

Чылай работниксене хулари тата районри организацисене куҫарнӑ. Сӑмахран, П. Косточкин юлташ хула Совет председателӗ, С. Старухин — ВКП(б) райкомӗнче, Ляпаев — катка-пичке тӑвакан заводра технорук пулса ӗҫлеҫҫӗ т. ыт. те.

Хальхи вӑхӑтра 1-мӗш номерлӗ цехра стахановецсем 136, ударниксем 41 ҫын. Пурте вӗсем кулленхи ӗҫ нормине темиҫе хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

(Хамӑр корр.).

„Авангард" артелӗн ӗҫӗсем

Канашри «Авангард» артель коллективӗ ВКП(б) Центральный Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ вырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем туса кӑларасси ҫинчен йышӑннӑ постановленине сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн, 1941 ҫулта туса ирттермелли мероприятисене палӑртрӗ.

Артель кӑҫал шеткӑсем, чӳлмексем туса кӑларас ӗҫе организацилеме тата кирпӗч, черепица туса кӑларассине вӑйлатма палӑртать. Артелӗн 8 гектарлӑ ҫӗр лаптӑкӗ пур. Вӑл ҫулсеренех тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫсем пуҫтарса илсе, хулари ӗҫҫыннисене сутать. Кӑҫал артель суту-илӳ организацисене пиллӗк тонна симӗс сухан ҫитӗнтерсе панӑ. Иртнӗ ҫулта пӗр теплица пулнӑ пулсан, кӑҫал вӗсем виҫҫӗ. Симӗс сухан лартса ҫитӗнтернӗ хыҫҫӑн артель хӑяр, помидор тата арбуз лартма хатӗрленет.

«Авангард» артель кроликсем ӗрчетме тытӑнать. Вӑл Чӑвашпромсоюз системине кӗрекен артельсенчен чи пысӑкки. Ҫулталӑкра 5 миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑларать. Пӗлтӗр артель пурӗ 780 пин тенкӗ, вӑл шутран пахча-ҫимӗҫсенчен 260 пин тенкӗ тупӑш илнӗ.

Д. Токманов.

Хӗрлӗ Ҫар кунне пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн

Районри чылай колхозсенче Осоавиахим членӗсене ҫар ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе группӑсем организациленӗ. «Красная Повария» колхозри тата туллимар вӑтам шкулти Осоавиахим пуҫламӗш организацийӗсем ҫумӗнче организациленӗ группӑсем лайӑх ӗҫленине уйрӑмах палӑртмалла. Вӑл группӑсенче тӑракан Осоавиахим членӗсем 48 сехет вӗреннӗ.

«Коснария», «Лӗпоер», «Красная Армия», Сталин, Чапаев ячӗпе тӑракан колхозсенчи пуҫламӗш организацисенче те группӑсенчи вӗренӗве начар мар организациленӗ. Дисциплина ҫирӗп. Вӗренӳ программине ҫирӗппӗн пӑхӑнса, тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Нумаях та пулмасть «Цивильстрой», «Богатырь» колхозсенчи пуҫламӗш организацисем ҫумӗнче ҫӗнӗ группӑсем организациленӗ. Группӑсене Хӗрлӗ Ҫар запасӗнче тӑракан командирсем ертсе пыраҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра допризывниксен ҫар ӗҫне вӗренмелли пункчӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Эпир кунти ӗҫе ытларах хаклатпӑр. Хӗрлӗ Ҫар ретне пур енчен те культурӑллӑ ҫынсем каймалла. Допризывниксенчен чылайӗшӗ оборона значокӗсен нормисене пачӗҫ. ПВХО значокӗн нормине 94 ҫын, ГСО значокӗн нормине 136 ҫын панӑ.

Осоавиахим членӗсенчен нумайӗшӗ йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗренме тытӑнчӗҫ. 234 ҫын йӗлтӗрпе ҫӳресе ГТО значокӗн нормине пачӗҫ. Осоавиахим членӗсене пурне те йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентме тӑрӑшатпӑр.

Хӗрлӗ Ҫар кунне хатӗрленнӗ май хӑшпӗр колхозсенче ҫӗнӗрен Осоавиахим пуҫламӗш организацисем тунӑ. Ҫак кунсенче кӑна 254 ҫын Осоавиахим членне кӗчӗҫ тата 189 тенкӗ член укҫи тӳлерӗҫ. Осоавиахим членне ҫӗнӗрен кӗнӗ ҫынсем пурте ҫар ӗҫне группӑсенче вӗренме тытӑнчӗҫ.

Ҫар ӗҫне вӗренесси пур организацисенче те кирлӗ пек пырать теме ҫук-ха. Ҫӗрпӳ хулинчи вӗренӳ группisem питех те начар ӗҫлеҫҫӗ. Кунта вӗренме ҫӳрекенсен шучӗ чаксах пырать. Ку ҫитменлӗхе пӗтерес пулать. Хӗрлӗ Ҫар 23 ҫул тултарнӑ куна Осоавиахим ӗҫне тӗпренех лайӑхлатнипе кӗтсе илмелле.

Н. ТАНЛЭ.

Осоавиахим Ҫӗрпӳ райсоветӗн председателӗ.

Стахановецсен ӗҫукҫийӗ

ҪЕМЕРЛЕ. (Хамӑр корр.): Древкомбинатри 5-мӗш номерлӗ цехри стахановецсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пынӑ май пысӑк ӗҫукҫи илеҫҫӗ.

Жестянщик Иван Ванин юлташ январь уйӑхӗнче хӑйӗн нормине 380 процент тултарса 1001 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. Ку вӑл декабрь уйӑхӗпе танлаштарсан ӗҫ тухӑҫлӑхне икӗ хут ытла ӳстерни пулать. Петр Велединский юлташ январьте 708 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. Вӑл та нормӑна виҫӗ хута яхӑн ирттерсе тултарнӑ.

Модельщиксем И. Федякинпа М. Ваганов юлташсем январь уйӑх планне икӗ хут ирттерсе тултарнӑ. Вӗсен уйӑхри ӗҫукҫи 864—881 тенкӗ шутланать.

Пӗлтерни

Ыран, февралӗн 21-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре Ялхуҫалӑх Институчӗн ҫуртӗнче МОПР. Шупашкар хулинчи организацийӗн конференцийӗ пухӑнать.

Шупашкар хулинчи МОПР комитечӗсемпе ячейкисем уйӑрнӑ делегатсен кӑтартнӑ вӑхӑт тӗлне пухӑнмалла.

Делегатсене ҫавӑнтах регистрацилеҫҫӗ.

МОПР горкомӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Чебоксарской артели Автоwill ремонт системы Чувашпромсоюза на 1 января 1941 года

(В ТЫСЯЧ. РУБ.)

АКТИВ	На 1 января 1940 г.	На 1 января 1941 г.	ПАССИВ	На 1 января 1940 г.	На 1 января 1941 г.
I. Средства вне оборота			Фонды и резервы	589,2	602,5
Основные средства	319,9	316,5	Долгосрочные кредиты	—	—
Расходы за счет буд. периодов	3,1	9,5	Краткосрочные кредиты Госбанка	—	—
Отвлеченные средства	23,0	59,4	Расчеты (кредиторы)	98,7	59,0
Итого средства вне обор.	346,0	385,4	Прибыли	18,6	51,3
II. Средства в обороте					
Предметы не относимые к основным средствам	59,0	60,0			
Сырье, материалы и топливо	144,6	140,4			
Производство	13,9	17,9			
Готовая продукция и тов.	75,7	74,4			
Товары отгруж. и вып. работы	—	13,6			
Денежные средства	26,7	1,4			
Расчеты (дебиторы)	40,6	19,7			
Итого средства в обороте	360,5	327,4			
БАЛАНС	706,5	712,8	БАЛАНС	706,5	712,8

Счет прибылей и убытков (тыс. руб.)

Расходы и убытки			Доходы и прибыли		
Убытки от реализации	3,9	—	Доходы от реализации	38,2	49,7
Расходы и убытки разные	22,9	6,4	Доходы разные	7,2	8,0
ИТОГО	26,8	6,4	ИТОГО	45,4	57,7
Чистая прибыль отч. года	18,6	51,3			
БАЛАНС	45,4	57,7	БАЛАНС	45,4	57,7

Председатель правления **Стариков.**
Главный бухгалтер **Капентьев.**

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашпромсоюза от 3 февраля 41 года, протокол № 25.

Председатель балансовой комиссии **Шишкин М. С.**
Секретарь **Яковлев Д. Я.**

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Мар-Посадской артели „Парижская Коммуна" системы Чувашпромсоюза на 1-I—41 года (в. т. р.)

АКТИВ	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.	ПАССИВ	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.
Основные средства	51,1	94,8	Фонды и резервы	103,6	136,0
Расходы за счет будущих периодов	2,7	1,1	Долгосрочные кредиты	13,0	7,2
Отвлеченные средства	46,2	62,2	Краткосрочные кредиты госбанка	40,5	—
ИТОГО	100,0	158,1	Расчеты	38,1	43,0
			Прибыль	62,6	72,6
Предметы не относимые к основным средствам	22,9	26,4			
Сырье, материалы и топливо	55,1	48,8			
Тара и запасные части	6,1	6,4			
Производство	7,0	0,2			
Готовая продукция и товары	44,8	8,7			
Денежные средства	6,2	4,2			
Расчеты	15,7	6,0			
БАЛАНС	257,8	258,8	БАЛАНС	257,8	258,8

Результат хозяйственной деятельности

Расходы и убытки	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.	Доходы и прибыли	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.
Убытки от реализации продукции от своего производства	2,9	—	Доходы от реализации продукции своего производства	46,3	71,5
Расходы и убытки разные	5,0	6,6	От реализации разных товаров	11,8	2,6
Прибыль отчетного года	62,6	72,6	Разные доходы	12,4	5,1
БАЛАНС	70,5	79,2	БАЛАНС	70,5	79,2

Председатель правления артели **Мочалов.**
Гл. бухгалтер **Шевнин.**

Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашпромсоюза 27/I—1941 г. протокол № 10.

Председатель балансовой комиссии Чувашпромсоюза **Шишкин.**

Редакци адресӗ: - Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторӑн—0—67, редактор заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн — 4—40, пропаганда пайӗн — 4—97, парти пурнӑҫ пайӗн — 7—97, экономика пайӗн—0—88. ҫырусемпе рабселькорсен пайӗн —2—30, «Еҫхӗрарӑмӗ» журналӑн — 6 — 23, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн — 0 — 85, издательство заведующийӗн—5—38, конторӑн—0—23.
НТ 2470.
Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.